27-мĕш çул кухать. Хакĕ 20 пус.

1944
НОЯБРЬ
7
ЫТЛАРИКУН
220(6715) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXVII çул тултарни

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. СТАЛИН юлташ

ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн Мускав хулинчи партипе общество организацийĕсемпе пĕрле 1944 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче пулнă чаплă ларăвĕнче тунă доклад

ЮЛТАШСЕМ!

Паян совет çыннисем пирĕн çĕршывра совет революцийĕ çĕнтерниренпе XXVII çул тултарнине уявласа ирттереççĕ.

Тăваттăмĕш хут ĕнтĕ пирĕн çĕршыв совет революцийĕн уявне фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçă кунĕсенче кĕтсе илет.

Çакă вăл, паллах, вăрçăн тăваттăмĕш çулĕ хăйĕн итогĕсем тĕлĕшпе вăрçăн маларанхи виçĕ çулĕнчен уйăрăлса тăманнине пĕлтермест. Пачах та урăхла, вĕсем хушшинче пысăк уйрăмлăх пур. Вăрçăн малтанхи икĕ çулĕ нимĕç çарĕсем наступлени туса пынă тата вĕсем пирĕн çĕршывалла шалалла куçса пынă çулсем, Хĕрлĕ Çарăн оборонăллă çапăçусем туса пыма тивнĕ çулсем пулчĕç пулсан, вăрçăн виççĕмĕш çулĕ пирĕн фронтра татăклă улшăну пулса, тăнă çул, Хĕрлĕ Çар, тăшманпа çапăçса, хăватлă наступлени сарса янă çул, нимĕççене татăклă чылай çапăçусенче çапса аркатнă çул, совет çĕрĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне нимĕç çарĕсенчен тасатса, вĕсене оборонăна куçмалла туса хунă çул, çакăнпа пĕрлех Хĕрлĕ Çар ун чухне нимĕç çарĕсене хирĕç çаплах пĕччен, союзниксем енчен пысăк пулăшу илмесĕр, вăрçса пынă çул пулчĕ пулсан, — вăрçăн тăваттăмĕш çулĕ вара совет çарĕсемпе пирĕн союзниксен çарĕсем нимĕç çарĕсене татăклăн çĕнтерсе пынă çул пулчĕ, нимĕççен ку расра ирĕксĕрех икĕ фронтра вăрçмалла пулса тăчĕ, вĕсене Германи чиккисем патнелле сирсе ыватрĕç.

Юлашкинчен иртнĕ çулталăк нимĕç çарĕсене Совет Союзĕн çĕрĕ çинчен, Франци, Бельги, вăтам Итали çĕрĕсем çинчен хăваласа кăларнипе тата вăрçă ĕçĕсене Германи территорийĕ çине куçарнипе вĕçленчĕ.

1. Германи икĕ фронтăн хĕскĕчĕ хушшинче

Хĕрлĕ Çар кăçалхи çул татăклă çитĕнӳсем туни тата нимĕççене Совет çĕрĕ çинчен хăваласа кăларни пирĕн çарсем нимĕç çарĕсене чылай хутчен аркатмаллах пыра-пыра çапнинчен килчĕ, çавăн пек пыра-пыра çапассине кăçалхи январь уйăхĕнчех пуçласа янă та отчетлă çулăн мĕнпур тăршшĕнче вара ăна вăйлатсах пынă.

Пирĕн çарсем нимĕççене малтанхи хут кăçалхи çулăн январь уйăхĕнче Ленинградпа Новгород патĕнче пырса çапрĕç, çавăн чухне Хĕрлĕ Çар нимĕççен нумай вăхăтлăха тунă оборонине çĕмĕрсе тăкрĕ те нимĕççене Балтика тăрăхнелле сирсе ыватрĕ. Çавăн пек пырса çапнине пула Ленинград облаçне ирĕке кăларнă.

Иккĕмĕш хут нимĕççене кăçалхи февраль—март уйăхĕсенче Бут шывĕ çинче пырса çапнă, çавăн чухне Хĕрлĕ Çар, нимĕç çарĕсене çапса аркатса, вĕсене Днестр шывĕ леш енне сирсе ыватрĕ. Çавăн пек пырса çапнине пула Днепр шывĕ леш енчи Украинăна фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

Виççĕмĕш хут нимĕççене кăçалхи апрель—май уйăхĕсенче Крым районĕнче пырса çапнă, çавăн чухне нимĕç çарĕсене Хура тинĕселле сирсе пăрахнă. Çавăн пек пырса çапнине пула Крымпа Одессăна нимĕç пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă.

Тăваттăмĕш хут нимĕççене кăçалхи июнь уйăхĕнче Карели районĕнче пырса çапнă, çавăн чухне Хĕрлĕ Çар финсен çарĕсене çапса аркатрĕ, Выборгпа Петрозаводск хулисене ирĕке кăларчĕ те финсене Финлянди çĕрĕ çине шалалла сирсе ыватрĕ. Çавăн пек пырса çапнине пула Карел-Финн Советлă республикин ытларахĕш пайне ирĕке кăларнă.

Пиллĕкмĕш хут нимĕççене кăçалхи июнь—июль уйăхĕсенче пырса çапнă, çавăн чухне Хĕрлĕ Çар нимĕç çарĕсене Витебск, Бобруйск, Могилев хулисем патĕнче çапса аркатрĕ те хăйĕн ĕçне нимĕççен 30 дивизине Минск патĕнче çавăрса илнипе вĕçлерĕ. Çавăн пек пырса çапнине пула пирĕн çарсем çаксене пурнăçа кĕртрĕç: а) Белорусси Советлă республикине талккишпех ирĕке кăларчĕç; б) Висла шывĕ çине тухрĕç тата пирĕнпе союзлă Польшăн чылай пысăк пайне ирĕке кăларчĕç; в) Неман шывĕ çине тухрĕç тата Литва Советлă республикин ытларахĕш пайне ирĕке кăларчĕç; г) Неман шывĕ урлă каçрĕç те Германи чиккисем патне пырса çитрĕç.

Улттăмĕш хут нимĕççене кăçалхи июль—август уйăхĕсенче Хĕвеланăç Украина районĕнче пырса çапнă, çавăн чухне Хĕрлĕ Çар, нимĕç çарĕсене Львов патĕнче çапса аркатса, вĕсене Сапна Висла шывĕсен леш енне сирсе ыватрĕ. Çавăн пек пырса çапнине пула: а) Хĕвеланăç Украинăна ирĕке кăларнă; б) пирĕн çарсем, Висла шывĕ урлă каçса, Висла леш енче Сандомир хулинчен хĕвеланăçнерехре хăватлă плацдарм туса хунă.

Çиччĕмĕш хут нимĕççене кăçалхи август уйăхĕнче Кишинев — Яссы районĕнче пырса çапнă, çавăн чухне пирĕн çарсем нимĕççемпе румынсен çарĕсене пуçĕпех çапса аркатрĕç те хăйсен ĕçне нимĕççен 22 дивизине Кишинев патĕнче çавăрса илнипе вĕçлерĕç, ку шута румынсен дивизийĕсем кĕмеççĕ. Çавăн пек пырса çапнине пула: а) Молдаван Советлă республикине ирĕке кăларнă; б) Германин союзницине — Румынне стройран кăларнă, вăл вара Германипе Венгрие хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ; в) Германин союзницине—Болгарие стройран кăларнă, вăл та çавăн пекех Германие хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ; г) хамăр çарсем валли Германин Европăри юлашки союзницин — Венгрин çĕрĕ çине кĕрсе кайма çул уçса панă; д) пирĕнпе союзлă Югославие нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре пулăшу пама май туса хунă.

Саккăрмĕш хут нимĕççене кăçалхи сентябрь—октябрь уйăхĕсенче Балтика тăрăхĕнче пырса çапнă, çавăн чухне Хĕрлĕ Çар нимĕç çарĕсене Таллинпа Рига хулисем патĕнче çапса аркатрĕ те вĕсене Балтика тăрăхĕнчен хăваласа кăларчĕ. Çавăн пек пырса çапнине пула: а) Эстони Советлă республикине ирĕке кăларнă; б) Латви Советлă республикин ытларахĕш пайне ирĕке кăларнă; в) Германин союзницине — Финляндие стройран кăларнă, вăл вара Германие хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ; г) нимĕçсен 30 дивизине ытла Пруссирен татса хăварнă та вĕсене Тукумспа Либава хушшинчи районра хĕскĕчпе хĕстерсе лартнă, халĕ ĕнтĕ вĕсене унта пирĕн çарсем шаккаса пĕтерсе пыраççĕ (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Кăçалхи октябрь уйăхĕнче пирĕн çарсем Тиссăпа Дунай шывĕсем хушшинче, Венгри районĕнче, тăххăрмĕш хут пырса çапма тытăнчĕç. Кунта пырса çапнин тĕллевĕ — Венгрие вăрçăран кăларса, ăна Германие хирĕç çавăрасси пулнă. Ку ĕç вĕçленмен-ха. Кунта пырса çапнипе: а) пирĕн çарсем нимĕççене хăваласа ярас тата Белграда ирĕке кăларас ĕçре пирĕнпе союзлă Югославие тӳрремĕнех пулăшу пачĕç; б) пирĕн çарсем Карпат тăвĕсен хысакĕ урлă каçма тата пирĕнпе союзлă Чехословаки республикине алă парса пулăшма май илчĕç. Чехословаки республики территорийĕн пĕр пайне халĕ нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă та ĕнтĕ.

Юлашкинчен, кăçалхи октябрь уйăхĕн вĕçĕнче нимĕç çарĕсене Çурçĕр Финляндире пырса çапас ĕçе пурнăçа кĕртнĕ, ун чухне нимĕç çарĕсене Печенга районĕнчен хĕссе кăларнă. Пирĕн çарсем вара, нимĕççене хăваласа пырса, пирĕнпе союзлă Норвеги çĕрĕ çине кĕрсе кайрĕç (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Çав операцисем вăхăтĕнче тăшман, вилнисемпе аманнисене шутласан, миçе çын çухатнине, пирĕн çарсем мĕн чухлĕ орудисем, танксем, самолетсем, снарядсем, пулеметсем тата ытти те тытса илнине кăтартакан цифрăсене эпĕ илсе кăтартмастăп. Çав цифрăсене Эсир Совинформбюро сводкисем тăрăх пĕлетĕр пулĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн иртнĕ çулти тĕп операцийĕсем, нимĕç çарĕсене пирĕн çĕршывран хăваласа кăларасси патне илсе çитернĕскерсем.

Çак операцисене пула нимĕççемпе вĕсен союзникĕсен 120 дивизине çити аркатса тăкнă тата стройран кăларнă. Иртнĕ çулта пирĕн фронта хирĕç 257 дивизи, вăл шутрах нимĕççен 207 дивизийĕ тăнă пулсан, халĕ ĕнтĕ пирĕн фронта хирĕç, мĕнпур «тотальнăй» тата «сверхтотальнăй» мобилизацисем хыççăн, нимĕççемпе венгерсен 204 дивизийĕ тăрать, вĕсенчен нимĕç дивизийĕсем 180 дивизирен ытла мар.

Çакна йышăнас пулать: хальхи вăрçăра гитлерла Германипе унăн фашистла çарĕ иртнĕ мĕнпур вăрçăсенчи Германипе унăн çарĕнчен хăватлăрах, ултавлăрах тата опытлăрах тăшман пулчĕç. Кун çумне çакна та хушас пулать: нимĕççем хальхи вăрçăра пĕтĕм Европăн тенĕ пекех производствăллă вăйĕсемпе тата хăйсен вассальнăй государствисен чылаях пысăк çарĕсемпе усă курма пултарчĕç. Вăрçă тумалли условисем Германишĕн çакăн пек лайăх пулнине пăхмасăр вăл пур-пĕрех пĕтсе ларасси патне çитсе тăчĕ пулсан, çакна вара Германин тĕп противникĕ — Совет Союзĕ гитлерла Германирен вăйлăрах пулнипе ăнлантарса памалла (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра иртнĕ çулта пулнă çĕнĕ япала тесе çак факта йышăнмалла: Хĕрлĕ Çар хăйĕн операцийĕсене кăçал нимĕç çарĕсене хирĕç иртнĕ çулсенчи пек пĕччен мар, пирĕн союзниксен çарĕсемпе пĕрле туса ирттерчĕ. Тегеранри конференци ахаль иртмерĕ. Германие хĕвеланăçĕнчен, хĕвелтухăçĕнчен тата кăнтăртан пĕрле пырса çапасси çинчен Тегеранри конференци йышăнни тĕлĕнмелле тĕплĕн те тĕрĕс пурнăçа кĕме тытăнчĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Хĕрлĕ Çар çуллахи операцисене ĕçе кĕртнипе пĕр вăхăтрах союзниксен çарĕсем Франциe кĕрсе каяс ĕçе тытăнчĕç тата хăватлă наступлениллĕ операцисем организацилерĕç, çаксене пула вара гитлерла Германин ирĕксĕрех икĕ фронтра вăрçмалла пулчĕ. Пирĕн союзниксен çарĕсемпе флочĕ Франци çыранне организацилĕх тата анлĕш енĕпе историре халиччен пулман массăллă десант антарчĕç те нимĕççен укрепленийĕсене питĕ ăста çĕнтерчĕç.

Çапла вара, Германи икĕ фронт хушшинчи хĕскĕче хĕсĕнсе ларчĕ.

Кĕтме тивĕçлĕ пулнă пекех, Хĕрлĕ Çарпа союзниксен çарĕсем пĕрле пырса çапнине тăшман чăтса тăраймарĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă, унăн çарĕсене кĕске вăхăтрах вăтам Италин, Францин, Бельгин, Совет Союзĕн çĕрĕсем çинчен сирпĕтсе кăларнă. Тăшмана Германи чиккисем патне сирсе ыватнă.

Çакăн пирки иккĕленмелли çук: Европăра нимĕççен 75 дивизине тытса тăракан иккĕмĕш фронт организацилемесĕр, пирĕн çарсем нимĕç çарĕсен хирĕç тăрас вăйне çавăн пек кĕске срокра çĕмĕрсе тăкма тата вĕсене Совет Союзĕн çĕрĕ çинчен сирпĕтсе кăларма пултарайман пулĕччĕç. Анчах, çавăн пекех, çакăн пирки те иккĕленмелли çук: Хĕрлĕ Çар, кăçалхи çулла хăватлă наступлениллĕ операцисем туса пырса, нимĕççен 200 дивизине çити хăйĕн умĕнче тытса тăман пулсан, пирĕн союзниксен çарĕсем те нимĕç çарĕсене çавăн пек хăвăрт аркатса тăкма тата вĕсене Итали, Франци, Бельги çĕрĕсем çинчен сирпĕтсе кăларма пултарайман пулĕччĕç.

Задача халĕ Германие малашне те икĕ фронтăн хĕскĕчĕ хушшинче тытса тăрасси пулать.

Çакăнта ĕнтĕ çĕнтерӳ тумалли май.

2. Совет халăхĕн Отечественнăй вăрçăра тунă паттăрла аслă ĕçĕ

Хĕрлĕ Çар Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пултарчĕ пулсан тата нимĕççене Совет çĕрĕ çинчен хăваласа кăларчĕ пулсан, çакна вăл пирĕн пĕтĕм çĕршыв, пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем тылран мĕнпур вăя хурса пулăшса тănипе турĕ. Мĕнпур совет çыннисен — рабочисен, хресченсен, интеллигенцин вăя хĕрхенмесĕр туса пынă ĕçĕ, çавăн пекех тата пирĕн государствăпа парти органĕсен ертсе пырас ĕçĕ те иртнĕ çулталăкра «Йăлтах фронт валли» текен ялав айĕнче пулса пычĕ.

Иртнĕ çулталăк промышленность, ялхуçалăхĕ, транспорт çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе, пирĕн вăрçă хуçалăхĕ çĕнĕ ӳсĕм тунипе палăрса тăрать.

Вăрçăн тăваттăмĕш çулĕнче пирĕн заводсем танксемпе самолетсем, тупăсемпе минометсем, боеприпассем вăрçă пуçламăшĕнче туса кăларнинчен темиçе хут нумайрах туса кăлараççĕ. Ялхуçалăхне юсаса ура çине тăратас чи йывăр тапхăр хыçа тăрса юлчĕ. Тăван çĕршыва Донпа Кубанĕн тухăçлă уйхирĕсене тавăрса панă хыççăн, Украинăна ирĕке кăларнă хыççăн, пирĕн ялхуçалăхĕ йывăр çухатусенчен хăвăрт тӳрленсе пырать. Советсен чугун çул транспорчĕ йывăр тиеве тӳссе ирттерчĕ, ун пек тиеве урăх кимĕнле çĕршывăн транспорчĕ те тӳссе ирттереймен пулĕччĕ-и, тен. Кусем пурте ĕнтĕ совет государствин экономикăллă никĕсĕ тăшманла государствăсен экономикинчен танлаштарма çук хăватлăрах пулни çинчен калаççĕ.

Октябрьти революципе çуралнă социализмлă строй пирĕн халăхпа пирĕн çара аслă та никам çĕнеймин вăй-хăват пачĕ. Совет государстви, вăрçăн пысăк йывăрлăхне пăхмасăр, çĕршывăн питех те пысăк тата экономика тĕлĕшĕнчен паха районĕсене вăхăтлăха нимĕççем оккупациленине пăхмасăр, вăрçă вăхăтĕнче фронта хĕçпăшалсемпе боеприпассем парса тăрассине чакармарĕ, çулран çул ӳстерсе пычĕ. Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн танксем, тупăсем, самолетсем нимĕç çарĕнничен сахалтарах мар, нумайтарах. Пирĕн боевой техникăн пахалăхне илсен, вăл вара ку тĕлĕшпе тăшман хĕçпăшалĕнчен нумай малта тăрать. Хĕрлĕ Çар, фашистла çарсене хирĕç нумай вăхăт хушши пĕччен йывăррăн кĕрешсе пырса, вăрçă тĕлĕшĕнчен çĕнтерӳ тунă пекех, совет тылĕнчи ĕççыннисем те, гитлерла Германипе тата унпа пĕр каварлисемпе пĕччен кĕрешсе пырса, тăшмана экономика тĕлĕшĕнчен çĕнтерчĕç (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ). Совет çыннисем хăйсене кирлĕ нумай япаласене илмесĕр тăчĕç, фронта ытларах пулăшас тесе, материальнăй пурнăç тĕлĕшĕнчен нумай йывăрлăхсене ăнланулллăн тӳссе ирттерме кăмăл турĕç. Хальхи вăрçăн нимĕнпе танлаштарма çук йывăрлăхĕсем совет халăхĕн хурçă пек вăй-хăвачĕпе паттăрлăхне хавшатаймарĕç, татах та ытларах çирĕплетрĕç. Пирĕн халăх тивĕçлипех геройла халăх чапне илчĕ.

Пирĕн рабочи класс хăйĕн мĕнпур вăйне çĕнтерӳ тунă çĕре парать, производство техникине пĕр чарăнмасăр çĕнетсе, лайăхлатса пырать, промышленность предприятийĕсен хăватне ӳстерсе пырать, çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем тăвать. Совет Союзĕн рабочи класĕ çак вăрçăра паттăрла аслă ĕç турĕ.

Пирĕн интеллигенци техникăпа культура ĕçĕнче çĕнĕрен çĕнĕ майсем шухăшласа кăларас çулпа пырать, кучуххехи техникăна ăнăçлăн малалла аталантарать, унăн çитĕнĕвĕсемпе Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тунă çĕрте пултаруллăн усă курать. Совет интеллигенцийĕ хăйĕн пултаруллă ĕçĕпе тăшмана çапса аркатас ĕçе нимĕнпе хакласа çитерме çук пархне кӳчĕ.

Çар кучуххехи лайăх хĕçпăшалсăр çапăçма тата çĕнтерме пултараймасть. Анчах вăл çавăн пекех тырпулсăр та, апат-çимĕççĕр те çапăçма, çĕнтерме пултараймасть. Хĕрлĕ Çар вăрçăн тăваттăмĕш çулĕнче те, колхоз хресченĕсем тăрăшнине пула, апат-çимĕç çитменнине курмасть. Колхозниксемпе колхозницăсем — рабочисемпе интеллигенцие апат-çимĕç, промышленноçа вара — чĕртавар парса тăраççĕ, фронт валли хĕçпăшалсемпе снаряжени туса кăларакан заводсемпе фабрикăсене йĕркеллĕ ĕçлеме май параççĕ. Пирĕн колхоз хресченĕсем, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне пĕтĕмĕшпех ăнланса тăрса, тăшмана çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшаççĕ.

Совет хĕрарăмĕсем тата пирĕн мухтавлă çамрăксем тунă паттăрла чаплă ĕçсем яланлăхах историе кĕрсе юлаççĕ. Вĕсем фабрикăсемпе заводсенчи, колхозсемпе совхозсенчи ĕçĕн тĕп йывăрлăхĕсене хăйсен çурăмĕ çинче тӳссе ирттерчĕç. Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн совет хĕрарăмĕсем, арçын ачасемпе хĕрачасем ĕç фронтĕнче хастарлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ. Вĕсем Тăван çĕршыва фашистла нимĕç ирсĕрĕсенчен хӳтĕлекен хăйсен ашшĕсемпе ывăлĕсен, мăшăрĕсемпе тăванĕсен чапне тивĕçлĕ пулчĕç.

Совет çыннисем тылра тунă паттăрла ĕçсем, пирĕн воинсем фронтра вăрçă ĕçĕсенче тунă манăçа юлми паттăрла ĕçсем пекех, хĕрӳллĕ те чĕрĕ пурнăçлă совет патриотизмĕнчен çăлкуçланса тухаççĕ.

Совет патриотизмĕн вăйĕ çакăнта пулса тăрать: вăл рассăллă е нациллĕ тĕшмĕшлĕхсем çинче мар, халăх хăйĕн тăван Совет çĕршывне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса, тăван çĕршывшăн шанчăклă пулса тăни çинче, пирĕн çĕршыври мĕнпур нацисен ĕççыннийĕсем пĕр-пĕринпе тăванла та туслă пурăнни çинче никĕсленсе тăрать. Совет патриотизмĕнче халăхсен нациллĕ

(Юлашки 2-мĕш страницăра)

Совет Союзĕн Маршалне И. В. СТАЛИНА „Çĕнтерӳ" орденĕ пани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. КАЛИНИН юлташ ноябрĕн 5-мĕшĕнче Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Виссарионович СТАЛИНА «Çĕнтерӳ» орденне алла панă. Ăна çак орденпа вăл Хĕрлĕ Çарăн наступленине организацилес тата пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе калама çук паха ĕçсем тунăшăн наградăланă, çав ĕçсене пула вара Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ Германи çарне чи пысăк поражени тӳстернĕ, фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнчи пĕтĕм лару-тăрăва тĕпренех Хĕрлĕ Çар майлă улăштарса янă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Виссарионович СТАЛИНА, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче йышăннă Указĕ тăрăх, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕ панă. Ку ордена ăна срок тухнă хыççăн Хĕрлĕ Çарта юлса нумай çулсем хушши ĕçленĕ генералсене, офицерсене тата сержантсене орденсемпе медальсем парса наградăлас йĕркепе панă.

И. В. СТАЛИН юлташ доклачĕн вĕçĕ

традицийĕсем тата Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисен пĕрлĕхлĕ пурнăç интересĕсем таччăн пĕтĕçсе тăраççĕ. Совет патриотизмĕ пирĕн çĕршыври мĕнпур нацисемпе халăхсене вĕр-пĕринчен уйăрса тăмасть, пачах та урăхла, вĕсене пĕр тăванла çемьене пĕтĕçтерет. Çакăнта курмалла ĕнтĕ Совет Союзĕнчи халăхсен ытларах та ытларах çирĕпленсе пыракан иксĕлми туслăхĕн никĕсĕсене. Çав вăхăтрах, ССР Союзĕнчи халăхсем чикĕ леш енчи çĕршывсенчи халăхсен прависемпе никама пăхăнманлăхне те хисеплеççĕ тата хăйсем кӳршĕри государствăсемпе яланах мирлĕ те туслă пурăнма хатĕр тăнине кăтартса параççĕ. Пирĕн государство ирĕклĕхе юратакан халăхсемпе тытса тăракан çыхăнусем ӳссе тĕрекленсе пынин никĕсне çакăнта курмалла та ĕнтĕ.

Совет çыннисем нимĕç захватчикĕсене вĕсем ют наци çыннисем пулнă пирки мар, вĕсем пирĕн халăхшăн тата ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсемшĕн вĕçĕ-хĕррисĕр хĕнхурпа асап илсе килнĕ пирки курайманççĕ. Пирĕн халăх ĕлĕкренпех çапла калать: «Кашкăра вăл кăвак пулнă пирки мар, вăл сурăха çисе янă пирки хĕнеççĕ» (КУЛАÇÇЕ. НУМАЙЧЧЕН АЛА ÇУПАÇÇЕ).

Нимĕç фашисчĕсем хăйсен идеологийĕ хĕçпăшалĕ вырăнне этемлĕхе курайман рассăллă теорие суйласа илнĕ, тискер-кайăкла национализм нимĕç захватчикĕсене чуралăхри халăхсем тĕлĕшпе пуç пулса тăма мораллĕ-политикăллă майсем туса парĕ тесе шутланă. Анчах та гитлеровецсем пурнăçа кĕртсе пыракан рассăллă курайманлăх политики, чăннипе илсен, фашистла нимĕç государствин шалти вăйсăрлăхĕн тата тулашри политикăра ăна пĕр-пĕччен тăратса хăварассин çăлкуçĕ пулса тăчĕ. Рассăллă курайманлăхăн идеологийĕпе политики гитлерла вăрăхурахсен блокĕ арканса каясси патне илсе пынă факторсенчен пĕри пулаççĕ. Çакна ăнсăртран пулнă теме юрамасть: нимĕç империалисчĕсене хирĕç Францин, Югославин, Польшăн, Чехословакин, Грецин, Бельгин, Данин, Норвегин, Голландин чуралăха кĕрсе ӳкнĕ халăхĕсем кăна мар, тата Гитлерăн вассалĕсем пулнă итальянецсем, румынсем, финсем, болгарсем те çĕкленчĕç. Гитлер ушкăнĕ хăйĕн çынçиенле политикине пула тĕнчери пĕтĕм халăхсене Германие хирĕç тăратрĕ, «суйласа илнĕ нимĕç расси» текенскер вара мĕнпур халăхсем курайман рассă пулса тăчĕ.

Вăрçă пынă вăхăтра гитлеровецсем вăрçă тĕлĕшпе кăна мар, тата моральпе политика тĕлĕшпе те поражени тӳсрĕç. Пирĕн çĕршывра çирĕпленсе çитнĕ мĕнпур рассăсемпе нацисен пĕртанлăхĕн идеологийĕ, халăхсен туслăхĕн идеологийĕ гитлеровецсен тискер-кайăкла национализмĕн тата рассăллă курайманлăхĕн идеологине пĕтĕмĕшпех çĕнтерчĕ.

Халĕ, Отечественнăй вăрçă çĕнтерӳллĕ вĕçленесси патнелле пынă вăхăтра, совет халăхĕн историри вырăнĕ хăйĕн пĕтĕм пысăкĕшĕпе тухса тăрать. Совет халăхĕ, хăйне шеллемесĕр паттăррăн кĕрешсе, Европăри цивилизацие фашистла аркатуçăсенчен çăлса хăварнине халĕ пурте йышăнаççĕ. Çакăнта пулать ĕнтĕ совет халăхĕн этемлĕх историйĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ питех те пысăк ĕçĕ.

3. Германие хирĕçле коалици фрончĕ тĕрекленни тата сарăлни. Мирпе хăрушсăрлăх ыйтăвĕ

Иртнĕ çулталăк Германие хирĕçле коалицин пĕрлехи ĕçĕ тунă чаплă çĕнтерӳсен çулталăкĕ пулчĕ; çав пĕрлехи ĕçшĕн Совет Союзĕнчи, Великобританири халăхсем тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи халăхсем боевой союза пĕрлешрĕç. Иртнĕ çулталăк виçĕ пысăк çĕршывăн пĕрлĕхĕ тĕрекленнин тата вĕсем гитлерла Германие хирĕç пĕр-пĕринпе килĕштерсе кĕрешесси ӳснин çулталăкĕ пулчĕ.

Германие хирĕç пĕрле çапăçасси çинчен Тегеранри конференци йышăннă решени тата çав решение питĕ чаплăн пурнăçа кĕртни Гитлера хирĕçле коалици фрончĕ тĕрекленнине кăтартса паракан чи паха тĕслĕхсенчен пĕри пулса тăрать. Германие пĕрле пырса çапас тĕлĕшпе Тегеранри конференцире туса хатĕрленĕ плана çав тери туллин те тĕрĕс пурнăçа кĕртнĕ; пĕрлехи тăшмана хирĕç пĕрле кĕрешсе пысăк вăрçă операцийĕсем тумалли плана çавăн пек туллин те тĕрĕс пурнăçлани историре сахал тупăнать. Çакăн пирки иккĕленмелли çук: виçĕ аслă çĕршывăн шухăшĕсем пĕрлĕхлĕ пулман пулсан тата вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе кĕрешмен пулсан, Тегеранра йышăннă решени çакăн пек туллин те тĕрĕс пурнăçа кĕме пултарайман пулĕччĕ. Тепĕр енчен, çакăн пирки те иккĕленмелли çук: Тегеранра йышăннă решение ăнăçлăн пурнăçа кĕртни Пĕрлешнĕ Нацисен фронтне тĕреклетмесĕр тăма пултарайман.

Вăрçă хыççăнхи хăрушсăрлăха организацилес ыйтупа Думбартон—Оксра пулса иртнĕ конференцин решенийĕсене те Пĕрлешнĕ Нацисен фрончĕ çирĕппине кăтартса паракан яр-уçă тĕслĕх тесе шутлас пулать. Хăрушсăрлăхăн хăшпĕр ыйтăвĕсем тĕлĕшпе виçĕ держава хушшинче килĕштерсе çитерменнисем пурри çинчен калаçаççĕ. Килĕштерсе çитерменнисем, паллах, пур тата вĕсем ытти чылай ыйтусем тĕлĕшпе те пулĕç. Килĕштерсе çитерменнисем пĕр партире тăракан çынсем хушшинче те пулкалаççĕ. Вĕсем тĕрлĕ государствăсен тата тĕрлĕ партисен представителĕсем хушшинче пулма тивĕçлĕ те ĕнтĕ. Кунта килĕштерсе çитермен ĕçсенчен мар, вĕсем çав тери сахаллинчен тата вĕсене, ялан тенĕ пекех, кашнинчех виçĕ аслă держава пĕрлĕхлĕ пулмалла туса, вĕсен ĕçĕсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе пымалла туса татса панинчен тĕлĕнмелле. Ĕç кунта килĕштерсе çитермен ыйтусенче мар, çав килĕштерсе çитермен ыйтусем виçĕ аслă державă пĕрлĕхлĕ пулас интерессем кăтартса паракан виçерен тухса кайманнинче тата, юлашкинчен, вĕсене çав пĕрлĕхĕн интересĕсем хушнă пек татса панинче. Çакă паллă: пирĕн иккĕмĕш фронт уçас ыйту тăрăх килĕштерсе çитерменнисем нумай пысăкрах пулнă. Анчах тата çакă та паллă: çав килĕштерсе çитереймен ыйтусене юлашкинчен пĕтĕмĕшпех килĕштерсе çитерсе татса панă. Думбартон—Оксри конференцире пулнă килĕштерсе çитереймен ыйтусем çинчен те ĕнтĕ çавнах калама пулать. Çав конференци унта хăшпĕр килĕштерсе çитереймен ыйтусем тухса тăнипе мар, хăрушсăрлăх ыйтăвĕсен вунă пайĕнчен тăхăр пайне çав конференцире пĕтĕмĕшпех пĕр шухăш-кăмăллă пулса татса панипе палăрса тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ эпĕ Думбартон—Оксри конференцин решенийĕсене Германие хирĕçле коалицин фрончĕ çирĕп пулнине кăтартса паракан чи уçăмлă тĕслĕхсенчен пĕри вырăнне хурса хаклама кирлĕ тесе шутлатăп.

Пĕрлешнĕ Нацисен фрончĕ çирĕпленсе пынине кăтартса паракан татах та уçăмлăрах тĕслĕх тесе, нумаях пулмасть Великобритани правительствин пуçлăхĕпе Черчилль господинпа тата Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Иден господинпа Мускавра туса ирттернĕ калаçусене шутлас пулать, çав калаçусене туслă лару-тăрура тата пĕтĕмĕшпех пĕр шухăш-кăмăллă пулса туса ирттернĕ.

Пĕрлешнĕ Нацисене пĕр-пĕринчен уйăрса ярас тата пĕр-пĕринпе хирĕçтерес тесе, вĕсене пĕр-пĕрне шанмалла мар тăвас тесе, пĕр-пĕрин çине туслă мар пăхмалла туса хурас тесе, пĕр-пĕрне çавăн пек шанмалла мар туса хурса тата, май килсен, вĕсене пĕр-пĕринпе кĕрештерсе, вĕсен вăрçăри вăйĕсене чакарас тесе, гитлеровецсем вăрçă пынă мĕнпур тапхăрта урса кайсах хăтланнă. Гитлерла политиксем мĕншĕн çавăн пек хăтланнине пĕтĕмпех паллă. Гитлерла империализма хирĕç пыракан кĕрешӳре Пĕрлешнĕ Нацисен пĕрлĕхĕ пек хăрушши гитлерла политиксемшĕн урăх нимĕн те çук, çавăнпа та союзлă державăсене пĕрлĕхлĕ тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре пĕр-пĕринчен уйăрса ярас пулсан, çакă вара вăл гитлерла политиксемшĕн вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен тунă чи пысăк çитĕнӳ пулнă пулĕччĕ.

Анчах фашистла политиксем аслă державăсен союзне пăсма хăтланни ахалех путлана-путлана ларнине пурте пĕлеççĕ. Çакă ĕнтĕ вăл ССР Союзĕпе Великобритани тата США союзĕ ăнсăртран тата вăхăтлăха килсе тухакан сăлтавсем çинче мар, пурнăçри нумай вăхăтлăха пыракан паха интерессем çинче никĕсленсе тăнине пĕлтерет.

Çакăн пирки иккĕленмелли çук: демократиллĕ державăсен боевой союзĕ виçĕ çул ытларах пыракан вăрçăн тĕрĕслевне тӳссе ирттерчĕ пулсан тата ăна хăйсен ирĕклĕхĕпе чыслăхне хӳтĕлеме çĕкленнĕ халăхсем юнпа пĕтĕçтерсе çирĕплетрĕç пулсан, çав союз вара вăрçăн юлашки тапхăрĕнчи тĕрĕслеве татах та ăнăçлăнрах тӳссе ирттерет, (НУМАЙЧЧЕН АЛА ÇУПАÇÇЕ).

Анчах иртнĕ çулталăк союзлă державăсен Германие хирĕçле фрончĕ çирĕпленнĕ çулталăк кăна мар, çавăн пекех тата çак фронт сарăлса пынă çулталăк та пулчĕ. Итали хыççăн Германин ытти союзникĕсене те—Финляндие, Румынне, Болгарие вăрçăран кăларса пăрахнине ăнсăртран килсе тухнă факт тесе шутлама çук. Çав государствăсем вăрçăран тухнине кăна мар, вĕсем çавăн пекех тата, Германипе тытăкан çыхăнусене татса, Германие хирĕç вăрçă пуçласа янине те, çапла вара вĕсем Пĕрлешнĕ Нацисен фронтне явăçнине те палăртас пулать. Çакă ĕнтĕ вăл, паллах, Пĕрлешнĕ Нацисен гитлерла Германие хирĕçле фрончĕ сарăлнине пĕлтерет. Германин Европăри юлашки союзникне те — Венгрие çывăх вăхăтрах стройран кăларса пăрахасси пирки нимĕн иккĕленӳ те пулма пултараймасть. Çакă вара вăл гитлерла Германи пĕр-пĕччен тăрса юлассине тата вăл пурĕпĕрех арканса каяссине пĕлтерет.

Пĕрлешнĕ Нацисем гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçа çĕнтерӳпе вĕçлесси умĕнче тăраççĕ.

Германие хирĕç пыракан вăрçăра Пĕрлешнĕ Нацисем çĕнтереççĕ, — çакăн пирки халĕ ĕнтĕ нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть.

Германие вăрçăра çĕнтересси — историллĕ аслă ĕçе пурнăçа кĕртессине пĕлтерет. Анчах вăрçăра çĕнтерни халăхсене малашне çирĕп мир тата шанчăклă хăрушсăрлăх туса панине пĕлтермест-ха. Задача — вăрçăра çĕнтерессинче кăна мар, çĕнĕ агресси тата çĕнĕ вăрçă нихçан мар пулсан та, нумай вăхăт хушши пулмалла мар туса хурассинче тăрать.

Германи вăрçăра аяла пулсан, паллах, ăна экономика тĕлĕшĕнчен те, çавăн пекех вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен те хĕçпăшалсăрлантарĕç. Анчах вăл хăйĕн малтанхи хăватне чĕртсе ура çине тăратма тата çĕнĕ агресси пуçласа яма хăтланса пăхмĕ тесе шухăшлани айванла пулнă пулĕччĕ. Пуриншĕн те çакă паллă: нимĕçсен власть тытса тăракан çыннисем халех ĕнтĕ çĕнĕ вăрçа хатĕрленеççĕ. Истори çакна кăтартса парать: Германие пораженирен юсанса çитме тата хăйĕн хăватне ура çине тăратма 20—30 çуллăх кăна вăхăт кирлĕ. Германи енчен çĕнĕ агресси ан пултăр тесен е вăрçă çапах та пуçланас пулсан, — ăна пуçламĕшĕнчех пăчлантарса лартас тесен, ăна пысăк вăрçă пулса кайма парас мар тесен, мĕнле майсем пур-ха?

Çак ыйту акă мĕн пирки вырăнлă: истори кăтартса панă тăрăх, агрессиллĕ нацисем, тапăнакан нацисем пулнă пирки, çĕнĕ вăрçа яланах ытларах хатĕрленсе кĕтсе илеççĕ, мире юратакан нацисем вара, çĕнĕ вăрçă тума шутламан тата интересленмен пирки, вăрçа хатĕрленес тĕлĕшпе яланах кая юлаççĕ. Хальхи вăрçăри агрессиллĕ нацисем вăрçă пуçланас умĕнех ĕнтĕ ТАПĂНСА КĔМЕЛЛИ çарсене хатĕр тытса тăнă, мире юратакан халăхсен вара мобилизацие ХӲТĔЛЕСЕ ТĂРАКАН ÇАРСЕМ те çителĕклĕ таран пулман. Пирл-Харборти «инцидент» пек, Аслă океанри Филиппины тата ытти утравсене çухатни пек, Гонконгпа Сингапура çухатни пек пăшăрхантаракан фактсене ăнсăртран пулнă тесе шутлама çук; ун чухне Япони, агрессиллĕ наци пулса тăрса, вăрçă вăрçмашкăн мире юратакан политикăна тытса пынă Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен ытларах хатĕрленсе çитнĕ пулнă. Çавăн пекех вăрçăн малтанхи çулĕсенче Украинăна, Белоруссие, Балтика тăрăхне çухатни пек пăшăрхантаракан факта та ăнсăртран пулнă тесе шутлама çук; ун чухне Германи, агрессиллĕ наци пулса тăрса, вăрçă вăрçма ĕнтĕ мире юратакан Совет Союзĕнчен ытларах хатĕрленнĕ пулнă. Çак фактсене японецсемпе германецсен харпăрхăй пахалăхĕпе, вĕсем акăлчансенчен, американецсенчен, вырăссенчен лайăхрах пулнипе, вĕсем асăрханулăрах пулнипе тата ыттипе те ăнлантарма тăрăшни айванла пулнă пулĕччĕ.

Ĕç кунта харпăрхăйĕн пахалăхĕнче мар, ĕç акă мĕнре: çĕнĕ вăрçăшăн тăрăшакан агрессиллĕ нацисем, вăрçă вăрçма нумай вăхăт хушши хатĕрленекен тата ăна валли вăй пухакан нацисем пулнă пирки, вăрçă вăрçма яланах ĕнтĕ мире юратакан тата çĕнĕ вăрçăшăн тăрăшман нацисенчен ытларах хатĕр пулаççĕ, çапла пулмалла та. Çакă вăл паллах, ăна ăнланмалла та. Çакă вăл, кирлех пулсан, — историри законлă япала пулса тăрать, ăна шута илменни хăрушă пулнă пулĕччĕ.

Апла пулсан, çакна йышăнмасăр тăма çук: мире юратакан нацисем агрессие пĕтерсе лартма пултаракан мерăсене халех ĕнтĕ ятарласа туса хатĕрлемесен, килес вăхăтра каллех агресси вĕсемшĕн кĕтмен çĕртен пулма пултарать.

Çапла вара, çĕнĕ агресси тума Германие май парас мар тесен, вăрçă çапах та сиксе тухас пулсан — ăна пуçламĕшĕнчех пăвса лартас тесен тата ăна пысăк вăрçă пулса кайма парас мар тесен, çакна тума мĕнле майсем пур-ха?

Çакна тума, агрессиллĕ нацисене пĕтĕмĕшпех хĕçпăшалсăрлантарнисĕр пуçне, пĕр май кăна пур: мире хӳтĕлеме тата хăрушсăрлăх тума мире юратакан нацисен представителĕсенчен ятарласа организаци тумалла, çав организацин ертсе пыракан органне сахалтан та агрессие чарса лартма кирлĕ чухлĕ хĕçпăшаллă вăйсем памалла, вăл хĕçпăшаллă вăйсемпе кирлĕ чухне пĕр тăхтаса тăмасăр усă курма, агрессие чарса лартма е пĕтерсе хума тата агресси туса айăпа кĕрекеннисене наказани пама хушмалла.

Ку вăл хурлăхлăн аса килекен Лига пек, Нацисен Лиги пек пулмалла мар; унăн правăсем те, агрессие чарса лартма хатĕрсем те пулман. Çак организаци — тĕнчери халăхсем полномочи панă, ятарласа тунă çĕнĕ организаци пулĕ, мире хӳтĕлеме тата çĕнĕ агрессие чарса лартма унăн мĕн кирли пурте пулĕ.

Тĕнчери çак организацин ĕçĕсем çителĕклех витĕмлĕ те усăллă пулĕç тесе шанма пулать-и-ха? Гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăн тĕп йывăрлăхне хăйсем çурăмĕ çинче тӳссе ирттернĕ аслă çĕршывсем малашне те пĕр шухăшлă пулса тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесен, çав организацин ĕçĕсем витĕмлĕ те усăллă пулаççĕ. Çак кирлĕ условие пăссан вара вăл организацин ĕçĕсем усăллă пулаймĕç.

* * *

Юлташсем!

Совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар Отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра вĕсем умне туха тăнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар хăйĕн патриотла тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртрĕ те хамăрăн Тăван çĕршыва тăшманран ирĕке кăларчĕ.

Паянтан пуçласа яланлăхах пирĕн çĕр гитлерла ирсĕрсенчен тасалчĕ. Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар умĕнче унăн юлашки миссийĕ тăрса юлчĕ: пирĕн союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, фашистла нимĕç çарне çĕмĕрсе тăкас ĕçе вĕçлемелле; фашистла тискер-кайăка унăн хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлермелле тата Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартмалла (НУМАЙЧЧЕН ТĂВАЛЛАН АЛА ÇУПАÇÇЕ). Хĕрлĕ Çар çак задачăна çитес çывăх вăхăтрах пурнăçа кĕртĕ тесе шутлама çителĕклех сăлтавсем пур (НУМАЙЧЧЕН ТĂВАЛЛАН АЛА ÇУПАÇÇЕ).

Сывă пултăр пирĕн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çар! (АЛА ÇУПАÇÇЕ).

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Тинĕс-Çар Флочĕ! (АЛА ÇУПАÇÇЕ).

Сывă пултăр хăватлă совет халăхĕ! (АЛА ÇУПАÇÇЕ).

Сывă пултăр пирĕн Аслă Тăван çĕршыв! (ТĂВАЛЛАН АЛА ÇУПАÇÇЕ. ПУРТЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАÇÇЕ).

Фашистла нимĕç захватчикĕсене вилĕм! (ТĂВАЛЛАН АЛА ÇУПАÇÇЕ, НУМАЙЧЧЕН ОВАЦИ ТĂВАÇÇЕ. «СЫВĂ ПУЛТĂР СТАЛИН ЮЛТАШ!» — ТЕНЕ САСĂСЕМ ИЛТЕНЕÇÇЕ).

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем Хĕвел тухăç Пруссире, ГОЛЬДАП хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра, тăшман пе хотине танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳнĕ.

БУДАПЕШТ хули енче, ТИССА шывĕ пе ДУНАЙ шывĕ хушшинче, пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, ФОКОРУ, ОЧКАЙ, СЕРЕШИ, ВЕРНЯШ, СИЛАШИ-ИШТВАН, ВАШАД, ИЛЛЕ, АНДРАШИ, ТАКШОНИ ялĕсене туртса илнĕ. Тĕрĕслесе тухнă даннăйсем тăрăх, ТИССА шывĕпе ДУНАЙ шывĕ хушшинче ноябрĕн 2-мĕшĕнче, 3-мĕшĕнче тата 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 3.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Çапла вара, ноябрĕн 4-мĕшĕ вĕçленсе килнĕ тĕлелле ТИССА шывĕпе ДУНАЙ шывĕ хушшинче пирĕн çарсем мĕн пурĕ нимĕçсемпе венгерсен 10.518 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 58 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ.

Шупашкарта пулса иртнĕ чаплă лару

Ĕнер, ноябрĕн 6-мĕшĕнче, Советсен çурчĕн залĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă революци пулнăранпа 27 çул çитнĕ ятпа совет, парти тата обществăллă организацисен, хулари стахановецсемпе ударниксен, совет интеллигенцин чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Шăп 8 сехетре Хула Совет Исполкомĕн председателĕн ĕçĕсене тăваканĕ Аникин юлташ чаплă ларăва уçни çинчен пĕлтерет.

Лару участникĕсем, пĕр саслă пулса, президиума ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн секретарьне Чарыков юлташа, Чăваш АССР Совнаркомĕн председательне Матвеев юлташа, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председательне Андреева юлташа, ВКП(б) Обком секретарĕсене Ахазов, Андреев, Лисин, Иванов юлташсене, Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне Белолипецкий, ВЛКСМ Обкомĕн секретарьне Михайлов юлташсене тата хулари партипе совет организацисен руководителĕсене, хулари чаплă стахановецсене суйларĕç.

Унтан хисеплĕ президиум суйларĕç. Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн ятне асăннине залра ларакансем ура çине тăрса тăвăллăн ала çупнипе хисеп тăваççĕ.

Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Андреев, Микоян, Жданов, Хрущев, Берия, Шверник, Щербаков, Маленков, Вознесенский юлташсен ячĕсене те хĕрӳллĕн ала çупнипе кĕтсе илеççĕ.

Аникин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарни çинчен доклад тума Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председательпе Андреева юлташа сăмах парать. Андреева юлташ Октябрьти революцин пĕлтерĕшĕпе унăн тивлечĕ çинчен, социализмлă Тăван çĕршывăн 27 çулхи кĕрешĕвĕ çинчен, совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра тунă çĕнтерӳсем çинчен тата совет халăхĕн малашнехи задачисем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Чаплă лару пысăк çĕкленӳпе Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнать.

Çырăва йышăннă хыççăн чаплă лару хупăнчĕ. Лару хыççăн концерт пулчĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕнче

Хĕрлĕ Çарта срокран юлса нумай çулсем хушши ĕçленĕшĕн наградăсем пани

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, срок тухнă хыççăн Хĕрлĕ Çарта юлса нумай çулсем хушши ĕçленĕ маршалсене, генералсене, офицерсене, çавăн пекех тата сержантсене орденсемпе медальсем парса наградăланă. Награда илнисем хушшинче çаксем пур:

Совет Союзĕн Маршалĕсем — С. М. Буденный, А. М. Василевский, К. Е. Ворошилов, Л. А. Говоров, Г. К. Жуков, И. С. Конев, Р. Я. Малиновксий, К. А. Мерецков, К. К. Рокоссовский, И. В. Сталин, С. К. Тимошенко, Ф. И. Толбухин, Б. М. Шапошников.

Артиллерин главнăй Маршалĕ — Н. Н. Воронов.

Авиацин главнăй Маршалĕсем — А. Е. Голованов, А. А. Новиков.

Авиаци Маршалĕсем — Ф. А. Астахов, Г. А. Ворожейкин, Н. С. Скрипко, Ф. Я. Фалалеев, С. А. Худяков.

Артиллери Маршалĕсем — М. Н. Чистяков, Н. Д. Яковлев.

Бронетанковăй çарсен Маршалĕсем — П. А. Ротмистров, Я. Н. Федоренко.

Инженери çарĕсен Маршалĕ — М. П. Воробьев.

Çыхăну çарĕсен Маршалĕ — И. Т. Пересыпкин.

Арми генералĕсем — А. И. Антонов, И. Х. Баграмян, А. И. Еременко, Г. Ф. Захаров, И. И. Масленников, И. Е. Петров М. А. Пуркаев, В. Д. Соколовский, И. В. Тюленев, А. В. Хрулев, И. Д. Черняховский.

Генерал-полковниксем—П. А. Артемьев, П. И. Батов, П. А. Белов, В. Е. Белокосков, И. В. Болкин, К. Н. Галицкий, В. В. Глаголев, Ф. И. Голиков, А. В. Горбатов, В. Н. Гордов, А. А. Гречко, Д. Н. Гусев, А. С. Жадов, А. С. Желтов, М. И. Казаков, М. И. Ковалев, К. А. Коротеев, Н. И. Крылов, П. А. Курочкин, Д. Д. Лелюшенко, К. С. Москаленко, В. С. Попов, Н. П. Пухов, М. А. Рейтер, П. Л. Романенко, П. С. Рыбалко, И. В. Смородинов, С. Г. Трофименко, И. И. Федюнинский, М. С. Хозин, В. Д. Цветаев, Н. Е. Чибисов, И. М. Чистяков, В. И. Чуйков, С. М. Штаменко, М. С. Шумилов, Е. А. Щаденко.

Танковăй çарсен генерал-полковникĕсем — Н. И. Бирюков, С. И. Богданов, М. Е. Катуков, А. Г. Кравченко, И. З. Сусайков.

Авиаци генерал-полковникĕсем — К. А. Вершинин, С. К. Горюнов, Г. Г. Гурьянов, С. А. Красовский, Н. М. Науменко, Н. Ф. Папивин, С. И. Руденко, В. А. Судец, Т. Т. Хрюкин, Н. С. Шиманов.

Медицина службин генерал-полковникĕ— Е. И. Смирнов тата ыттисем те.

Комсомолецсемпе çамрăксен уяв парни

КУСЛАВККА, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатри комсомолецсемпе çамрăксен 97 бригади уяв ячĕпе стахановла вахтăна тăчĕç. Вĕсем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пычĕç. Крючков юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри комсомолецсемпе çамрăксен бригади октябрьти плана 325 процент тултарчĕ. Ку бригадăна Михаил Жолобов ертсе пырать. Вăл бригада членĕсене хăйĕн стахановла ĕçĕпе пример кăтартса пырать. Час-часах вăл кулленхи нормăна 5—6 хут ирттерсе тултарать. Ытти çамрăксем те бригадиртан юлмаççĕ. Акă, В. Винокуров слесарь октябрьти плана 275 процент тултарчĕ. Çавнашкалах Шатов начальник пулса ĕçлекен цехри çамрăксен бригадирĕ Борис Худяков та плана 350 процент тултарчĕ. Хăйĕн квалификацине куллен ӳстерсе пырса, Октябрь уявĕ тĕлне виçĕ тĕрлĕ профессие вĕренчĕ. Комбинатри чи лайăх сварщиксем Ф. Шакиров, А. Никифоров тата 15 çулхи Гусман Тухватулин плана 255 процент тултарчĕç. Хĕрсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Е. Федорова плана 219 процент, Татьяна Яковлева 250 процент тултарчĕç.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту итогĕсене тунă хыççăн, комбинатра комсомолецсемпе çамрăксен 63 бригадине фронтовой бригада ятне панă.

В. КАРПОВ.



МУСКАВ. КРЕМЛЬ.

Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе, гитлерла Германие пĕтĕмпех аркатса тăкма пирĕн тĕреслĕхлĕ ĕçе пĕтĕмпех çиеле кăларма—малалла!

ЭСИР ТЕ ПĔТĔМ ВĂЯ ÇĔНТЕРӲ ТУНĂ ÇĔРЕ ПАРĂР

Герой çырăвĕ

Хаклă земляксем! Эпир, Хĕрлĕ Çар воинĕсем, аслă праçник ячĕпе Сире, хисеплĕ земляксем, пĕтĕм чун-чĕререн хĕрӳллĕ саламласа, Тăван çĕршывшăн ĕç фронтĕнче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме сывлăх сунатпăр.

Тусăмăрсем, Хĕрлĕ Çар инçетри çурçĕртен пуçласа Карпат тăвĕсем патне çити тăсăлса выртакан фронтра ылханлă тăшмана хирĕç çапăçать. Совет çĕршывне хӳтĕлекенсен — фронтовиксен тӳсĕмлĕхĕ, паттăрлăхĕ тата мухтавĕ çав тери пысăк. Вĕсем нимĕнле йывăрлăхсем умĕнче те чарăнса тăмасăр нимĕç тискер кайăкне пĕтерсе пыраççĕ. Эпир сахал мар нимĕçе ĕнтĕ леш тĕнчене ăсатрăмăр. Анчах нимĕç тискер кайăкне хăйĕн шăтăкĕнчех пĕтерсе тăкмасăр пирĕн ĕç вĕçленес çук. Халĕ вăрçă нимĕç хулисемпе ялĕсене пырса кĕчĕ. Антив, нимĕç захватчикĕсем вăрçă мĕне пĕлтернине хăйсен йăвинче тӳссе пĕлччĕр.

Эпĕ лайăх астăватăп: эсир пире ăсатнă чухне çапăçура Улăп-паттăр пек пулма халаларăр. Эпир сирĕн наказа пĕр минутăлăха та манмастпăр. Халăх наказне пурнăçа кĕртессишĕн хыррăн çапăçнăшăн мана Совет Союзĕн Геройĕ ятне пачĕç. Нумай пулмасть, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илтĕм. Эпĕ пĕччен мар, пирĕн кашни воин хăйĕн çĕршыв умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшать.

Эсир те, паттăр земляксем, пĕтĕм вăя çĕнтерӳ тунă çĕре патăр. Пĕрлехи вăйпа Тăван çĕршыва тăшманран тасатса çитерсе тĕмĕр пулсан, халĕ ĕнтĕ хамăрăн пĕтĕм вăя тăшмана хăйĕн йăвинчех пĕтерсе тăкнă çĕре памалла. Тăшман урса кайсах хирĕç тăрать. Ана тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çар паттăррăн çапăçни, совет тылĕ вăя ӳстерсе ĕçлени кирлĕ. Сирĕн пархатарлă ĕç пире валли çĕнтерӳ хĕçпăшалне туптаса парать. Нумай пулмасть, эпир хаçатсенче чăваш колхозникĕсемпе колхозницисем Хĕрлĕ Çар фондне 500.000 пăт тырă пани, 12.000 тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç пама пулни çинчен вуларăмăр. Çав хыпар пире пысăк савăнăç кӳчĕ, тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапма çĕнĕ вăй пачĕ. Эпир сирĕн пулăшăва, эсир пирĕншĕн нимĕн те шеллеменнине хамăрăн кулленхи пурнăçра туйса тăратпăр. Эсир пирĕншĕн, Хĕрлĕ Çар воинĕсемшĕн, куллен тимлĕн тăрăшни пире вăрçăн вăрăм çулне çĕнтерӳллĕн утса тухма, çапăçусенче хăюллă пулма, тăшмана ним шеллемесĕр пĕтерсе пыма вăй-хăват парать.

Тăванăмсем, паттăр земляксем! Вăрçă ответлă тапхăра — нимĕç тискер кайăкне хăйĕн шăтăкĕнчех пĕтерсе тăкмалли тапхăра кĕчĕ. Çĕнтерĕвĕн çутă кунĕ çывхарса килет. Эпир, Хĕрлĕ Çар воинĕсем, çĕнтерӳ сехетне хăвăртрах çывхартас тесе, вăй-хăвата шеллемесĕр кĕрешетпĕр. Чăваш ĕçсыннисем, эсир те аслă Сталин хушнă пек ĕçлĕр. Вара эпир тăшмана хăвăртрах пĕтерсе тăкăпăр.

Совет Союзĕн Геройĕ гварди старши лейтенанчĕ Геннадий ГАБАЙДУЛИН.

ПĔТĔМ ВĂЯ—ТĂШМАНА ÇĔНТЕРМЕ

Вăрçăччен эпĕ вăтам шкулта вĕренеттĕм. Эпĕ учитель пулса, хамăн вăя халăха вĕрентес ĕçе пама ĕмĕтленеттĕм. Анчах фашистла нимĕç захватчикĕсем пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа килсе тапăнни манăн ĕмĕте татрĕ. Манăн вара çĕнĕ шухăш çуралчĕ, эпĕ Куславкка комбинатне ĕçлеме кĕтĕм.

Паллах, манăн малтанах нимĕнле професси те пулман. Çавăнпа эпĕ столяр ĕçне вĕренме тытăнтăм. Вăл ĕçе кĕске вăхăтрах алла илтĕм, кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлеме пуçларăм. Унтан мана мастер вырăнне ĕçлеме лартрĕç.

1943 çул манăн нихăçан манми çул пулса юлчĕ. Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пынă кунсенче эпĕ Ленинла—Сталинла комсомол ретне кĕтĕм. Вара эпир, чаплă партизанка Совет Союзĕн Геройĕ Зоя Космодемьянская ячĕпе, комсомолецсемпе çамрăксен бригадине организацилерĕмĕр. Мана бригади[illegible] турĕç. Ку вара мана тата та лайăхрах, мĕнпур вăя шеллемесĕр ĕçлеме хушрĕ. Пирĕн бригада, фронта валли ытларах продукци парас, хăйĕн чысне çӳлте тытас тесе, вăя шеллемесĕр, ĕç вăхăтĕнчи кашни секундăпа туллин усă курса ĕçлет. Бригада уйăхри ĕç нормине яланах 200—300 процентшар тултарса пычĕ. Стахановла ĕçлесе, эпир хамăр участокран ирçĕ çынна урăх ĕçе куçартăмăр та халĕ те нормăна тăваттăнах 2—3 хут ирттерсе тултаратпăр. Заводра, пирĕн ĕçе тивĕçлипе хакласа, бригадăна 4 хутчен мухтав грамотăсем парса наградăларĕç.

Халĕ пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар тăван çĕршыва фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатса çитерет. Вăрçă тăшман çĕрĕ çине куçрĕ. Эпир тахçантанпах кĕтнĕ çутă ĕмĕт çитрĕ. Аманнă нимĕç тискер кайăкĕ хăйĕн çитрĕ. Аманнă нимĕç тискер кайăкĕ хăйĕн юлашки кунĕсене пурăнса ирттерет. Çак чаплă кунсенче эпир тата лайăхрах ĕçлеме хавасланатпăр, тăшмана хăйĕн ирсĕр йăвинчех çапса аркатнă çĕре мĕнпур вăя паратпăр.

Е. ЕФРЕМОВА,
Комсомолецсемпе çамрăксен бригадирĕ.

Укерчĕк çинче (сулахайран сылтăмалла): пирĕн чаплă земляксем, Совет Союзĕн Геройĕсем: пĕрремĕш ретре — летчик А. Кочетов, минометчик Г. Габайдулин, летчик М. Сапожников, летчик Б. Васильев, пехотинец И. Яшин, артиллерист П. Лаптев; иккĕмĕш ретре — танкист В. Винокуров, пехотинец И. Поляков, летчик А. Тухланов, артиллерист Ф. Ахаев, пехотинец А. Иванов; виççĕмĕш ретре — артиллерист М. Салихов, летчик Ф. Орлов, летчик М. Ефимов, летчик З. Парфенова, танкист С. Коновалов.

Чăваш республики фронта чыслăн пулăшать

З. АНДРЕЕВА,
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулса иртнине пула, Ленинпа Сталин политикине пурнăçа кĕртсе пынине пула, Совет çĕршывĕ хăватлă индустриллĕ тата колхозлă держава пулса тăчĕ. Этемлĕх историйĕнче малтанхи хут пирĕн çĕршывра социализмлă общество туса хунă, совет халăхĕн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхне халиччен нихăçан пулман пек пĕтĕçтерсе çирĕплетнĕ, ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинче сталинла туслăх ӳссе чечекленнĕ. Хамăрăн çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем валли пуян та культурăллă пурăнма май туса панă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнине пирĕн çĕршыв татăклă çапăçусен кунĕсенче, пирĕн аслă та ăслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар тăшмана хăйĕн йăвинчех хăватлăн пыра-пыра çапнă вăхăтра, вăл чаплă çĕнтерӳсем тунă вăхăтра паллă тăвать.

Патша Российинче пусмăрта пулнă чăваш халăхĕ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтернине пула телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çулĕ çине тухрĕ.

Отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсенче, юратнă Тăван çĕршыва хӳтĕлеме пĕтĕм халăх кăкăрпа тăнă чухне, ытти мĕнпур тăванла халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле, вырăс халăхĕ пуç пулса ертсе пынипе, чăваш халăхĕн ывăлĕсем те фронтсенче паттăррăн çапăçаççĕ. Нумай пин çынна ССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Чăваш халăхĕн 25 ывăлне, Командовани панă хастарлăхпа кирлĕ заданийĕсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăскерсене, Совет Союз Геройĕн ятне панă. Вĕсем хушшинче пирĕн халăх Орлов, Поляков, Ефимов, Кочетов, Салихов тата ытти геройсен ячĕсене лайăх пĕлсе тăрать.

Чăваш халăхĕ хăйĕн ывăлĕсене Аслă Октябрьте çĕнтерсе илнĕ телейлĕ пурнăçа хӳтĕлеме фронта ăсатнă чухне: «Чăваш вăрманĕсенчи юман кĕрешсем пекех çирĕп пулăр», тесе пехилленĕ. Чăваш халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем хамăр халăхăн чыслăхĕпе историллĕ йăлисене çӳлте тытса пыраççĕ. «Пуçна çухатсан та чысна ан çухат», — теççĕ вĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçăва кĕнĕ чухне.

Чăваш халăхĕн ывăлĕсем хушшинче пирĕн çарсене ертсе пырас ĕçри мастерсем: Боголюбов генерал-лейтенант, Совет Союзĕн Геройĕ генерал-майор Петров, генерал-майор Макаров, гварди полковникĕ Воскресенский, Трофимов подполковник тата ыттисем те пур. Эпир чăваш халăхĕн Мария Гайкина пек хастар хĕрĕсемпе мухтанма пултаратпăр. Гайкина юлташăн паттăр та хăюллă ĕçне правительство пысăк наградăсемпе палăртса хăварчĕ.

Хамăрăн паттăр воинсене чыс та мухтав!

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Чăваш республикин мĕнпур хуçалăхĕ Тăван çĕршыв оборонишĕн, фронта пулăшассишĕн ĕçлеме тытăнчĕ. 1944 çулта Союза пăхăнса тăракан пирĕн промышленность, 1943 çулхи çак вăхăта çитичченхипе танлаштарсан, 108,4 процент, районри промышленность 127,6 процент чухлĕ продукци туса кăларчĕ, кăçалхи сентябрьте вара, пĕлтĕрхи сентябрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 147,6 процент чухлĕ продукци туса кăларчĕ.

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод виççĕмĕш кварталти производство программине 103,4 процент, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод — 100,5 процент чухлĕ тултарчĕç. Ку завод, иртнĕ çулхи çак вăхăт тĕлне çитичченхипе танлаштарсан, кăçал 43 процент ытларах продукци туса кăларнă. Куславкка комбиначĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура тăхăр уйăх хушши ĕнтĕ иккĕмĕш премисем илсе пырать. Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ вунă уйăхри программăна октябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ.

Совет воинĕсен чаплă çĕнтерĕвĕсем тылри ĕççыннисене çĕнĕрен те çĕнĕ, чаплă ĕçсем тума хавхалантараççĕ. Çĕмĕрле комбинатĕнчи стахановецсем Лаптев, Щеглов, Посадин юлташсем сменăри нормăсене 1000 процент таран тултарса пыраççĕ. Стахановецсем Хрящев, Серов тата Михеев юлташсем тăватшар çыншăн ĕçлеççĕ.

Канаш деповĕ октябрь уйăхĕнче Хусан чугун çулĕ çинче татах пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Кунта Доронин машинист чи лайăх çитĕнӳсем турĕ: унăн паровозĕ талăкра вăтамран 308 километр çӳрет.

Республикăри предприятисенче кăçалхи çул комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене тăвас ĕç анлăн саралса кайрĕ, çавăн пек бригадăсем халĕ пине яхăн шутланаççĕ. Соловьева юлташ комсомол комитечĕн секретарĕ пулса тăракан заводра комсомолецсемпе çамрăксен 94 бригади ĕçлет, вĕсенчен 41 бригада фронтри пек ĕçлекен бригадăн хисеплĕ ятне илнĕ. Куславкка комбинатĕнче комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем кĕске вăхăтра 73 çити, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра 95 бригадăна çити ӳснĕ. Çак юхăм Çĕмĕрле комбинатĕнче, Улатăрти паровозсем юсакан заводра тата ытти нумай предприятисенче те анлăн саралса кайрĕ.

Пĕр заводри Берехастов орденоносец ертсе пыракан фронтовой бригада нормăна 386 процент таран тултарса пырать. Канашри вагонсем юсакан заводри Совкин юлташ бригади уйăхри задание 275 процент чухлĕ тултарнă. Октябрьте Андронов, Кузнецов тата Гринь юлташсен бригадисем тăтăшах виçшер норма тултарса пынă.

Фронт заданийĕсене пурнăçласа пынă çĕрте пирĕн вăрман промышленноçĕнчи вăрман касакансемпе турттаракансем тухăçлăн ĕçлеççĕ.

Тăвай районĕнчи «Заря» колхозăн колхозникĕ Н. Тарасов юлташ, Хурамал вăрман пунктĕнче вăрман касаканскер, октябрĕн 25-мĕшĕнче задание 1.100 процент чухлĕ тултарнă. Унăн арăмĕ Е. Тарасова çав кунах виçĕ кунхи нормăна тултарнă. Чаплă патриотсем Тарасовсем ĕçлекен вăрман пункчĕн коллективĕ вутă хатĕрлемелли октябрьти плана срокчен тултарнă.

Алтышево вăрманпромхозĕ чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттармалли октябрьти задание срокчен виçĕ кун малтан пурнăçа кĕртрĕ. Улатăр районĕнчен пынă Чужайкин стахановец, вăрман турттарнă çĕрте ĕçлесе, октябрь уйăхĕнчи 25 ĕç кунĕнче пĕр лашапа 500 кубометр вутă турттарнă, çакă вăл нормăна 500 процент тултарни пулать.

Пирĕн предприятисенчи ĕç паттăрлăхне кăтартса паракан çакăн пек тĕслĕхсем нумай. Пирĕн халăх фронта пулăшнă çĕре мĕнпур вăйĕпе хăватне парать.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем правительство заданийĕсене çулсеренех ăнăçлăн тултарса пыраççĕ, фронтпа çĕршыва апат-çимĕç, промышленноса — чĕр тавар ытлăн-çитлĕн парса тăраççĕ. Çĕнтерӳ тăвассишĕн ударлă ĕçлессине вĕсем хăйсен пĕрремĕш тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Пирĕн колхозсемпе колхозниксем, патриотла пархатарлă туйăмпа хавхаланса, иртнĕ çул государствăна 2,5 миллион пăт тырă сутрĕç. Государствăна тырă памалли плана республика кăçал октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 500 пин пăт тырă пачĕ. Хальхи вăхăтра, Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксем пуçарнипе, республикăри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 740 пин пăт çĕрулми парассишĕн кĕрешеççĕ.

Республикăри нумай колхозсем кăçалхи çул тухăçлă тырпул туса илчĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне çĕнтерсе илнĕскер, Мускав облаçĕнчи «Победа» колхозпа ăмăртса, кашни гектартан 25-шер центнер тĕштырă, вăрлăх участокĕсенчен вара 36-шар центнер тырă пухса илчĕ.

Чкаловски районри Молотов ячĕпе тăракан колхозри Наумов юлташ ертсе пыракан звено 10 гектар çинчен 30-шар центнер çурхи тулă пухса илнĕ.

Пирĕн колхозсем çавăн пек вăйлă тырпула пур ĕçсене те вăхăтра та кал-каллăн туса пынипе çĕнтерсе илме пултарчĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз кăçал кĕрхи тырăсене 7 ĕç кунĕнче, çуртырррисене 12 ĕç кунĕнче вырса пуçтарчĕ. Елчĕк районĕнчи орденлă «Ново-Ишерякового» колхоз кĕрхи тырăсене 6 ĕç кунĕнче вырса пуçтарчĕ, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кĕлте турттарса капана хывса пĕтерчĕ.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра нумай колхозниксем паха ĕç тĕслĕхĕсем кăтартрĕç. Элĕк районĕнчи Комсомолăн IX-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозри Иванов колхозник кĕреплеллĕ çавапа норма тăрăх куллен 0,35 гектар çулас вырăнне 0,75 гектар çулса пынă. Вăрнар районĕнчи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тăракан колхозри М. Митрофановпа Н. Романов машиноведсем жнейкăпа куллен 6—7 гектар вырнă. Кун пек тĕслĕхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Нумай колхозсем оборонăллă культура — кок-сагыз акса тăвас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ, çав колхозсем кăçал тухăçлă кок-сагыз туса илчĕç. Çапла, сăмахран, Красноармейски районри «Красный Борденер» колхоз (председателĕ Петров юлташ) 5 гектар çинчен 20-шер центнер кок-сагыз тымарĕ, уйрăм участоксем çинчен 26-шар центнер пухса илнĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн районсем хушшинче пыракан ăмăртура Çĕрпӳ районĕ малти вырăнта тăрать. Çак район 1944 çулхи 5 уйăх хушшинче мăйракаллă шултăра выльăхсен йышне 17,7 процент, сыснасен йышне — 3,3 процент, сурăхсен йышне—26,7 процент чухлĕ ӳстернĕ. Çак çитĕнӳсемшĕн Çĕрпӳ районне Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă.

Фронта пулăшма чĕнсен Чăваш республикинчи ĕççыннисем яланах патриотла пысăк хавхаланупа ответлеççĕ. Самолет илме икĕ хутчен государствăна 100.000-шер тенкĕ панă патриот-колхозник Ферапонт Головатый пĕтĕм çĕршыври ĕççыннисене Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники туянмашкăн укçа-тенкĕ пухма чĕнсе каласан, пирĕн республикăри ĕççыннисем унăн патриотлă чĕнĕвĕ çине çийĕнчех ответлерĕç. Чăваш республикинчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума хăйсен перекетленĕ укçи-тенкине хывма тытăнчĕç. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Гайзов юлташ Совет Союзĕн Геройĕ Кочетов юлташ валли самолет тума хăйĕн перекетленĕ укçинчен 110.000 тенкĕ хыврĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Васинин юлташ хăйĕн ывăлĕ-летчик валли самолет тума 100.000 тенкĕ пачĕ.

Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ оборона фондне 198.000 тенкĕ пухса пачĕ. 3.064-мĕш номерлĕ госпитальте ĕçлекенсен коллективĕ хăй пухнă укçапа санитарнăй самолет илсе, Хĕрлĕ Çара пачĕ, халĕ çав коллектив çĕнĕ самолет илет.

Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума укçа-тенкĕ пухас ĕç Чурачăк, Вăрмар, Шăхасан, Муркаш тата ытти районсенче кал-каллăн пулса пычĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем государствăн виççĕмĕш Военнăй Заемĕн облигацийĕсене икĕ кун хушшинче 184 миллион тенкĕлĕх ытла çырăнса илчĕç. Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене республикăра 33 миллион тенкĕ ытларах сарнăччĕ. Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕсене сарас ĕç те пысăк çĕкленӳпе тата организованно пулса пырать, паянхи кун тĕлне пĕтĕмпе 43 миллион тенкĕлĕх сарнă.

Чăваш республикин интеллигенцийĕ, наука çыннисем, учительсем, врачсем, писательсемпе художниксем — кашни хăйĕн вырăнĕнче — тăшмана пуçĕпех çапса аркатас ĕçе хăйсен вăйĕсене параççĕ.

Чăваш халăхĕ, Аслă Октябрь кунĕнче хăйĕн çĕнтерĕвĕсене уявласа, хамăрăн аслă çулпуçăмăр, тусăмăрпа учителĕмĕр умĕнче çапла тупа тăвать: чăваш халăхĕ тăван çĕршывшăн нимĕн те хĕрхенсе тăмасть, ылханлă нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкса, çĕнтерĕвĕн çутă кунне çывхартас тесе, вăл фронтăн кирек мĕнле заданине те чыслăн пурнăçлать.

ВУНИКĔ АЧА АМĂШĔ

Пурнăç яланах пĕр пек тикĕс пымасть. Çыннăн лайăххи те, начарри те, савăнмалли те, тарăхмалли те пулать. Анна Михайловна Степановăн пурнăçĕнче те вуникĕ ача пăхса ӳстернĕ вăхăтра, сахал мар чăрмавсем пулнă.

Акă эпир ун патне чăрмантарма пынă чухне те вăл кăмака умĕнче ачисемпе тăрмашатчĕ. Чи кĕçĕнни сăпкара сикетчĕ. Эпир, кăштах тĕпелелле иртсен, аптрасах тăтăмăр: те ларас ĕнтĕ, те тăрас... Ачисем вара сак çинче те, урайĕнче те сиксе, чупса, выляса çӳреççĕ.

— Ара чарăнăр-ха, ачасем, килне çынсене лармa вырăн парăр хăть, — терĕ амăшĕ, эпир ура çинче тăнине курса. Ачисем вара сĕтел умĕнче ирĕк вырăн турĕç. Амăшĕ пăртакках ерĕçрĕ те тĕпелелле пырса сăпкари ачине алла илчĕ.

— Çак кĕçĕнни чирлерех пачĕ-ха, — терĕ вăл. — Ыттисем ку таранччен те чирлесе курман. Çăмăлах мар ĕнтĕ çавăн чухлĕ ача пăхса ӳстерме. Кӳршĕсем хăшпĕр чухне манран: «Хăçан ларса канатăн эсĕ», тесе ыйтаççĕ. Чăнах та, ывăнтарать ĕнтĕ хăшпĕр чухне, тарăхмалли те пулать — ăна та тумалла, кăна та асăрхамалла. Анчах, юрать, пурнăçĕ халь ĕлеккинчи пек асапллă мар та, аптăрасах каймастпăр. Акă пирĕн пӳрт кивелнĕччĕ тата пĕчĕккĕччĕ. Тăватă çул каярах çĕнĕ пысăк пӳрт лартрăмăр. Ăçтан вăй тупнă пулăттăмăр-ха эпир çĕнĕ пӳрт лартма? Ырă та, государство пособи парса пулăшрĕ. Ыттисемшĕн темле те, анчах пирĕншĕн ача нумайăни хальхи вăхăтра пĕрре те чăрмав мар. Ӳсчĕр, çын пулччăр, хăйсене пăхакансене ан манччăр, Тăван çĕршыва чĕререн юратакан çынсем пулса ӳсчĕр — эпĕ çапла çеç калатăп... Иккĕшĕ вăрçăра-ха манăн. Пĕр хĕрпе пĕр ывăл нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç çапăçаççĕ. Тепĕр ывăл «Красный строитель» артельте ĕçлет. Вăл та лайăх ĕçлет, теççĕ. Çапла пурăнатпăр. Ӳстересчĕ çак ачасене пурне те, ӳстересчĕ.

Çитернĕ хыççăн вăл алăри ачине сăпкана выртарчĕ. Пĕр вăхăт амăшĕ таврашĕнче ача пуçтарăнса тăчĕç. Вĕсен кашнинех амăшĕ çывăхнерех тăрас килчĕ пулас. Часах амăшĕн ытти урăх ĕçе тытăнмалла пулчĕ. Вăл вара ачисене ик-виçĕ сăмах хушрĕ те ĕçе тухса кайрĕ.

Акă вăл ача амăшĕ-героиня! Вăл чăннипех мухтава тивĕçлĕ. Вĕсене государство пулăшса тăнинче, вĕсене хисеплесе хунинче, парнелесе палăртнинче çав тери пысăк тĕреслĕх!

В. РЗАЙ.
«Красный Октябрь» колхоз, Йĕпреç р-нĕ.

МАНĂН ĔÇ ТĂШМАНА ПĔТЕРМЕ ПУЛĂШТĂР



Хĕрлĕ Çар ретĕнче виçĕ çул ытла пурăнни мана ĕçре хăюллă пулма вĕрентрĕ. Çавă ĕнтĕ халĕ манăн кулленхи ĕçре палăрать.

Хĕрлĕ Çартан таврăннă хыççăнах эпĕ Канашри депора автоматнăй бригадăн бригадирĕ пулса ĕçлерĕм. Унтан, машинистсен курсĕнче 6 уйăх вĕреннĕ хыççăн, машинист пулса ĕçлеме пуçларăм. Çавăнтанпа ĕнтĕ пĕрмаях машинист пулса ĕçлетĕп. Çак хушăра парти ретне кĕтĕм. Ку мана ĕçре татах та ответлăрах пулма, хамăн пĕлĕве малалла ӳстерсе пыма хушрĕ.

Ĕçлеме тытăннăранпа манăн пĕр аварие те пулман. Кашни уйăхрах хамăн плана тултарса пыратăп, кăмрăк перекетлетĕп. Манăн стахановла ĕçе Совет Правительстви пысăка хурса хакларĕ. 1942 çулта мана Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕç. 1944 çулта Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине тата «Отличник-паровозник» значока илме тивĕçлĕ пултăм. Хаклă наградăда мана татах та лайăхрах ĕçлеме вăй-хăват пачĕ. Манăн паровоз тасалăх тĕлĕшĕнчен яланах пĕрремĕш вырăна тухать.

Кăçал аслă уяв кунĕнче çĕршывпа фронт валли чаплă парне хатĕрлес тесе, эпĕ ертсе пыракан колонна хăй çине пысăк обязательствăсем илчĕ. Хамăр обязательствăсене эпир чыслăн пурнăçларăмăр.

Депора ĕçленĕ вăхăтра эпĕ чылай çамрăксене професси илме пулăшрăм. Акă эпĕ вĕрентнĕ çамрăксенчен пĕри—Игнатьев юлташ халь депора машинист пулса ĕçлет. Воронцовăпа Ашкатер юлташсем машинистсен помощникĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Эпĕ Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçа кĕртессишĕн малашне те мĕнпур хастарлăхпа кĕрешĕп. Антив, манăн стахановла ĕç тăшмана хăвăртрах пĕтерсе тăкма пулăштăр.

Л. НИКОЛАЕВ,
Машинист-орденоносец.

„Совет Союзĕн Гимнĕ" чăвашла пичетленсе тухрĕ

Чăвашгосиздат «Совет Союзĕн Гимнне» чăвашла тата вырăсла чĕлхепе уйрăм листовка туса пичетлесе кăларчĕ. Кунпа пĕрлех «Совет Союзĕн Гимнĕ» нотăсемпе пичетленсе тухрĕ. Нотăсем айне чăвашла

Полководец Сталин

Çиçĕм çиçрĕ, тăвăл хыпрĕ,
Аслати кисренчĕ.
Сăхă нимĕç шухăш тытрĕ —
Вăрçăпа çĕкленчĕ.
Ман Тăван çĕршыв хускалчĕ, —
Çирĕп ун вăй-халĕ;
Çĕнтермешкĕн шанчăк пачĕ
Полководец Сталин!

Пире парти хурçăлатрĕ
Пурнăçа кĕмешкĕн,
Пире Сталин çул кăтартрĕ
Тăшмана çĕнмешкĕн.
Ирĕк халăх чура мар тек,
Çирĕп ун вăй-халĕ.
Сывă пултăр аслă парти,
Полководец Сталин!

Кар тăрса, пĕр çын пек эпĕр,
Вутлă тăвăл витĕр,
Тăшмана шав çĕмĕретпĕр,—
Вилĕмĕ ун çитрĕ.
Хĕрлĕ Çарăн чаплă ячĕ
Иксĕлмĕ, çуталĕ.
Ана хурçă хăват пачĕ
Полководец Сталин.

Ян янрать тăван Мускавăн
Гимн пек йыхравĕ.
Вырăс халăхĕн мухтавĕ —
Парăнми йăхра вăл.
Пирĕн юрă — хурçă маршлă,
Çĕнтерӳ ялавĕ.
Сывă пултăр аслă Маршал,
Полководец Сталин!

Илья ТУКТАШ.

Ирĕклĕ çĕршыв

Вут-çулăм хыпнă вăрçă уйĕ урлă
Хăюллăн утрĕ пирĕн паттăр Улăп.
Штыкпа чиксе çĕклерĕ нимĕçе,
Çĕклерĕ те пăрахрĕ тинĕсе.
Çухалтăр ирсĕр, нихăçан ан пултăр,
Вăл хăй шыранă çавă тивĕçе!

Сиксе хумханчĕ Балтика сатуррăн.
Боец питне ун шывĕпеле çурĕ.
Тăварлă шыв тăварлă тар пекрех.
Боец чĕрийĕ тапрĕ çирĕпрех.
Унтан боец выртса çĕре чуптурĕ:
— Тăван çĕршыв, татах эс ирĕкре!

Çĕршыв кăкрийĕ çăмăллăн сывларĕ,
Вăрманĕсем ун савăнăçлăн кашларĕç,
Шыв-шурĕсем сутăлнĕç, йăлтăрса:

Вăл ирĕклĕ, вăл чыслă та таса!
Эпир те, ун халăхĕсем, юрлар-и
Хĕрлĕ Çара савса та мухтаса!

Мухтав сана, хăватлă халăх çарĕ,
Тăван çĕре эс мăшкăл памарăн!
Мухтав сана, пире çăлан çулпуç,
Чи аслă Маршал та чи сывăх тус!
Эс чĕртнĕ Хĕрлĕ Çăлтăрăн кăварĕ
Тĕнчешĕн сутрĕ çĕнĕ шурăмпуç.

Çав сутăпа пур халăхсем çĕкленнĕ,
Çав сутăра — Тăван çĕршыв илемĕ.
Çав сутăпа çĕн ĕмĕре кĕрер,
Çулпуç тавра пĕр йышлăн пĕтĕçер!
Çав сутăпа хаваслăн чечекленĕ
Нумай юн курнă пирĕн аслă çĕр.

Аркадий ЕСХЕЛ.

Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, ялхуçалăхĕнчи специалистсем! Фронтпа çĕршыва ытларах апат-çимĕç тата промышленноçа ытларах чĕртавар парса тăрăр!

Колхоз чысне çӳлте тытса пырăпăр

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарнине пирĕн колхоз пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕ. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче эпир тырă тухăçлăхне чакармарăмăр, тăтăшах ӳстерсе пытăмăр. 1942 çулта кашни гектартан 90 пăт тĕштырă пухса илнĕ пулсан, кăçал 108-шар пăт пухса илтĕмĕр. Сĕлĕ вара гектартан 20-шер центнер тухрĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана колхоз ытлашшипех тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те çулран çул ӳссе пырать. 1942 çулта кашни сăвакан ĕнерен 1100 литр сĕт илнĕ пулсан, иртнĕ çул 1300 литр илнĕ. Кăçал вара кашни ĕнерен 1.400 литртан кая мар сĕт илес задача лартнăччĕ, ăна пурнăçласси курăнсах тăрать. Çак çитĕнӳсене пирĕн колхоз членĕсем паттăр Хĕрлĕ Çара яланах пулăшса тăрас кăмăлпа ĕçлесе тунă.

Иртнĕ çул пирĕн колхоз обязательствăсем тăрăх тырă парса татнă хыççăн государствăна 13.500 пăт сутрĕ. Кăçал Хĕрлĕ Çар фондне плантан ирттерсе 2440 пăт тырă патăмăр, унсăр пуçне 1945 çулшăн аванс шучĕпе 3800 пăт панă.

Эпир государство умĕнче парăмлă мар. Обязательствăсем тăрăх аш-какай, çăмарта, çăм, сĕт-çу, пахча-çимĕç парса татнă. 1945 çулшăн 9000 литр сĕт панă, килес çулхи аш-какай обязательствине 50 процент пурнăçланă.

Государствăна панипе пĕрлех, эпир колхозниксене те ĕçкунĕсем тăрăх тырпулпа пахча-çимĕç тата ытти тĕрлĕ çимĕçсем çителĕклĕ валеçсе паратпăр. Тĕштырă кашни ĕçкунĕ çине 3,5 килограмм, çĕрулми 1 килограмм, купăста 1 килограмм валеçетпĕр, пахча-çимĕçсем çуршар килограмм тивеççĕ.

Колхозра тăрăшса ĕçлекен колхозниксем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, çĕнĕ пӳртсем туса лартрĕç. Вĕсенчен М. Николаева, Е. Курицына, Е. Сапожникова, П. Алексеева, Е. Портнова, Л. Лесников колхозниксене палăртмалла. Çавăн пекех пирĕн колхозра ĕнесĕр колхозниксем те çук.

Колхоз выльăхĕсем валли чылай çуртйĕр турăмăр. Кăçал кăна эпир 50 пăру вырнаçмалăх вите, сысна вити, сурăх вити, пӳтексене хупмалли ăшă вите тата 32 пуç вырнаçмаллăх лаша вити туса лартрăмăр. Вĕсемсĕр пуçне машинăсем лартмалли сарай, колхоз правленийĕн çуртне тата клуб турăмăр.

Çапла вара вăрçă çулĕсенче те пирĕн пурнăç начарланмарĕ. Фронтовиксем тăшмана пĕтерсе килсен, пире ӳпкелесе сăмах калаймĕç. Вĕсем таврăнсан, эпир те вĕсене колхозри çитĕнӳсем çинчен каласа пама пултаратпăр. Пирĕн колхозран кайнă чылай çынсем, вăрçă хирĕнче тăшмана хирĕç паттăррăн та хастарлăн çапăçса, орденсемпе медальсем илчĕç, мухтава тухрĕç. Лисицын, Портнов, Леонтьев офицерсен ячĕсемпе эпир чăннипех мухтанатпăр. Çакăнпа пĕрлех колхозра ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе фронта чыслăн пулăшса пынă стахановецсемпе стахановкăсене те ырă кăмăлпа ăншăн асăнатпăр. А. Табакова, И. Портнова, К. Викторова, Н. Волкова, Е. Смирнова, И. Иванова, М. Скрипкина, А. Емельянова тата ытти стахановкăсем яланах пирĕн хисепре пулĕç.

П. Леонтьев, М. Люлин, А. Емельянова бригадирсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç, пысăк тухăçлă тырпулшăн фронтри пек кĕрешрĕç. А. Плотников, Ф. Симакова, Н. Овчинникова, Н. Скрипкина юлташсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре мухтава тивĕç ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен ĕçĕнче фронтовиксемпе танлашма тăрăшрĕç.

Эпир Тăван çĕршыва тĕреклетессишĕн, Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пулăшассишĕн пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлерĕмĕр. Халĕ Хĕрлĕ Çар тăшмана паттăррăн аркатса пынă чухне татах та тăрăшарах ĕçлесе, хамăрăн Тăван çĕршывăн чысĕпе хисепне çӳлте тытса пырăпăр, унăн хăвачĕпе мухтавлăхĕшĕн татах та хастарлăнрах ĕçлĕпĕр. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăрăн алăра çирĕппĕн тытса тăрăпăр.

В. ЗАЙЦЕВ.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Чăваш халăх сывлăхĕшĕн

Эпĕ 76 çул пурăнатăп. Вĕсенчен 53 çул хушши пĕр татăлмасăр халăх сывлăхĕшĕн, уйрăмăн кусен, куç сывлăхĕшĕн, кĕрешнĕ çĕрте ĕçлетĕп. Юлашки сакăр çул хушши мана Чăваш республикинче ĕçлеме тӳрĕ килчĕ. Кунта мана хамăн кулленхи ĕçсемшĕн Правительство пысăк наградăсем парса чыс турĕ. Эпĕ халăх сывлăхне сыхлас ĕçри отличникĕн значокне, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне илме тивĕçлĕ пултăм. Мана хисеплĕ ят — наукăн тава тивĕçлĕ деятелĕн ятне пачĕç. Хальхи вăхăтра эпĕ чăвашсен трахоматознăй институчĕн научнăй руководителĕ пулса ĕçлетĕп.

Чăваш халăхĕ патша саманинче трахома чирĕпе питĕ асапланнă. Темиçе пиншер çын ĕмĕрлĕхех тĕнче çутине çухатнă. Трахома — чăваш халăхĕн йывăр инкекĕ пулнă. Çав инкеке пĕтерес тĕлĕшпе совет влаçĕ тата пирĕн государство пăхса çитĕнтернĕ куç тухтăрĕсем нумай вăй хурса ĕçлерĕç.

Пирĕн правительство халăх сывлăхне сыхлама нумай укçа-тенкĕ, нумай тĕрлĕ эмелсемпе врач ĕçĕнче кирлĕ хатĕрсем парать. Çакна ăна тăван çĕршывăн кашни кĕтесĕнчех курма пулать. Акă, государство Шупашкарта куç чирĕсене, трахомăна наука енчен тĕпчесе вĕренме трахоматознăй институт уçса панă.

Эпĕ çав института уçнăранпах унта ĕçлетĕп.

Чăвашсен трахоматознăй институчĕн ĕçĕ вăл — сывлăха сыхлав органĕсемпе пĕрле трахома чирне хирĕç кĕрешесси, çав чире пĕтĕмпех пĕтересси пулса тăрать.

Трахомăна пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн республикăра чылай пысăк çитĕнӳсем тунă пулин те, трахомлисем пур-ха. Пирĕн çав çынсене трахомăран сыватса, Хĕрлĕ Çар ретне, тылри паттăрсен ретне çĕнĕрен-çĕнĕ йыш парса тăмалла.

Вăрçăччен пирĕн институтра 10 куç тухтăрĕ ĕçленĕ, институтăн амбулаторине çулсерен 35 пин çынна яхăн çӳренĕ, стационарта выртса сывалма 100 койка пулнă. Наука енĕпе тĕпчев ĕçĕсем нумай туса ирттернĕ. Икĕ хутчен ăслăлăх конференцийĕсене пухнă, çав конференцисене пысăк специалистсем — профессорсем Мускав, Хусан, Уфа, Ижевск тата ытти хуласенчен те килнĕ.

Отечественнăй вăрçă пуçлансанах институт хăйĕн пĕтĕм ĕçне фронт интересĕсене пăхăнтарса урăхлатса йĕркелерĕ.

Боеца — сивĕч куç кирлĕ. Эпир ку енĕпе сахал мар ĕç тунă. Нумай пин çынна куç тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çар ретне тăма юрăхлипе юрăхлă маррине тĕрĕслесе тухнă, куç вăйсăррисене сыватма тăрăшнă.

Çав вăхăтрах институт ăслăлăх ĕçне пĕрре те вăйсăрлатман. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн ăслăлăх работникĕсем — тава тивĕçлĕ врач А. Шульпенкова, врачсем Н. Алексеев, Л. Гутман, М. Миролюбова, А. Васильева юлташсем çĕнĕ паха ĕçсем туса ирттерчĕç. Хам эпĕ «Оптические обманы в авиации» ятлă ĕçе çырса пĕтертĕм. Çав ĕçсене пурне те ăслăлăх конференцийĕсенче пăхса тухатпăр.

Медицинăн пысăк тата вăтам кадрĕсен квалификацине ӳстерсе пырас тĕлĕшпе ĕçлесси те вăрçă вăхăтĕнче чарăнса лармарĕ. Врачсем виçĕ ушкăнпа пĕтĕмпе 25 çын икĕ эрне хушши, фельдшерсемпе сестрасем пурĕ 85 çын пĕрер уйăх хушши институтра ĕçлесе вĕренчĕç. Вĕсем пурте паха опыт туянчĕç.

Трахомăна эпир пĕтерме пултаратпăр. Анчах çак ĕçре врачсене пĕтĕм халăх пулăшни кирлĕ. Халăх хушшинче санитари культурине анлăнрах сарса пымалла, халăхăн пĕтĕмĕшлĕ культурлăхне ӳстерессишĕн татах та ытларах вăй хурса ĕçлемелле.

Профессор А. ЧЕМОЛОСОВ,

Чăвашсен трахоматознăй институчĕн научнăй руководителĕ.

Совет Союзĕпе Швейцари хушшинчи çыхăнусем пирки

Октябрĕн 10-мĕшĕнче Швейцарин Лондонри посланникĕ Поль Рюгер господин Совет Союзĕн Великобританири посолне Швейцари Правительствин асра тытмалли запискине панă. Швейцари Правительстви унта Совет Союзĕн «Правительствинчен Швейцарипе Совет Союзĕ хушшинче çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăнусем пуçласа яма ыйтнă. Çав запискăра Швейцари Правительстви, Швейцарин авалхи демократиллĕ йăлисем çине кăтартса, хăй ĕлĕкхи ыйтусене уççăн сӳтсе-явма хатĕрри çинчен тата Совет Союзĕпе çĕнĕрен дипломатипе суту-илӳ çыхăнăвĕсем пуçласа ярасшăн пулни çинчен каласа парать.

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче Швейцарин Лондонри посланникне СССР Правительствин ответне панă. Совет Правительствин ответĕнче çапла каланă: Швейцари Правительстви Швейцарипе Совет Союзĕ хушшинче çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăнусем пуçласа яма сĕннине, Швейцари Правительствин асра тытмалли запискинче каланăскерне, Совет Правительстви пăхса тухрĕ. Çав запискăра, Швейцарин авалхи демократиллĕ йăлисем çинчен тата Швейцарин Федеральнăй Совечĕ ĕлĕкхи ыйтусене уççăн сӳтсе-явма хатĕрри çинчен каласа, çак юлашки çулсем хушшинче Швейцари Правительстви Совет Союзĕ тĕлĕшпе тытса пынă политика çинчен пĕр сăмах та каламан. Тĕрĕссипе çакна пурте пĕлеççĕ: Швейцари Правительстви, хăйĕн авалхи демократиллĕ йăлисене пăсса, темиçе çул хушши ĕнтĕ Совет Союзĕ тĕлĕшпе, ытти демократиллĕ çĕршывсемпе пĕрле мире юрататакан халăхсен интересĕсемшĕн гитлерла Германие хирĕç пĕр чарăнмасăр кĕрешекен пирĕн çĕршыв тĕлĕшпе, тăшманла политика, фашистсем майлă политика тытса пырать.

Çавăнпа та, Швейцари Правительстви хăйĕн Совет Союзне хирĕç пыракан ĕлĕкхи политикинчен нимĕнле майпа та пăрăнман пирки, Совет Правительстви Швейцарипе дипломатиллĕ тата ытти тĕрлĕ çыхăнусем тытма пуçлама сĕннине йышăнман.

СССР НАРКОМИНДЕЛЕН ИНФОРМАЦИ БЮРОВЕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă ятпа килнĕ саламсем

ОТТАВА, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарасси çывхарса килнĕ май ТАСС-ăн Оттаварри отделенине Сталин юлташпа Совет правительствине янă саламсем нумай килнĕ. Вĕсене Канадăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăхăн Наци Совечĕ урлă çаксем янă: Канадăн федеральнăй правительствин членĕсем, провинцисенчи правительствăсен пуçлăхĕсем, политикăллă партисемпе профсоюзсен руководителĕсем, хуласен мэрĕсем, тĕн ушкăнĕсен руководителĕсем, наукăпа искусство представителĕсем тата Канадăри ытти организацисемпе уйрăм çынсем.

Социал-демократсен партийĕн руководителĕ Колдуэлл, И. В. Сталин Маршала хăйне тата вăл ертсе пыракан хĕçпăшаллă вăйсене саламласа, çапла çырать: «Совет çарĕсем çапăçусенче тунă çав тери чаплă çитĕнӳсем пĕрлешнĕ нацисем вăрçă хыççăн та пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес ĕçре çавăн пек çитĕнӳсемех тăвассине пĕлтерсе тăччăр».

Канадăри рабочисен прогрессивнăй партийĕн руководителĕ Тим Бак хăйĕн саламлă çырăвĕнче çапла çырать: «Канадăри демократиллĕ шухăшлă кăмăллă çынсем тĕнчери пĕрремĕш социализмла государствăпа союзлă пулнипе савăнаççĕ. Хăйсен ывăлĕсен паттăрлăхĕпе тата вĕсем хастарлă çапăçма пултарнипе савăнса, Канада Германин гитлерла фашистла çарне аркатса тăкас ĕçре тата çав армин палăртса тăракан фашистла хаяр реакцин пур вăйĕсене те тататăклăн та тĕплипех пĕтерсе тăкас ĕçре Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ çав тери чаплă пулăшу пани çине чунтан-чĕререн савăнса пăхать».

Канадăн çар повинность министрĕ Лафлеш генерал хăйĕн саламлă çырăвĕнче çапла çырать: «Пĕрлехи тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре Сирĕн çарсем тăвакан калама çук чаплă çитĕнӳсем пире питĕ савăнтараççĕ. Сирĕн аслă çĕршывăн халăхĕ çав тери хастарлăн тӳссе ирттерекен питĕ пысăк жертвăсемпе асапсене эпир пĕтĕмпех пысăка хурса хаклатпăр».

Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăхăн конгресĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Совет Союзĕпе Англи хушшинчи туслăхпа килĕштерсе ĕçлессин конгресĕ уçăлнă. Конгреса делегатсем Англин пур вырăнĕсенчен те пынă. Совет Союзĕн посолне Гусева ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Пĕрремĕш ларура Челмсфордри епископ Генри Вильсон доктор председатель пулнă. Вăл Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери пурнăçра мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен каланă. Вăл çапла каланă: «Халĕ Германие вăрçă хыççăн мĕнле тыткаласси çинчен нумай калаççĕ. Эпĕ çакна тунаймастăп вара: çынсем каланинчен — ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлекенсем каланинчен те — нумайĕшĕ мана тĕлĕнтерсе яраççĕ. Нумай çынсемпе нумай нацисене власть шанса пама юрамасть. Власть вĕсен пуçне çавăрать. Вĕсем вара чăкăлташлă çынсем, тирансем пулса тăраççĕ. Çакă вăл Германин уйрăм палли пулса тăрать. Ăна нихçан та власть шанса пама юрамасть. Германин халь нимĕнле ăссăр ĕç те тума пама юратман кӳрши пур. Унăн çав кӳрши канăçлăхпа мире юрататть, вăл канăçлăхпа мир тума тивĕçлипе тăрăшĕ».

Ларура Сталинградпа Ленинград хулисен совечĕсен председателĕсем янă саламсене вуласа панă.

Парламент членĕ Притт Англипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем пирки тăратнă резолюци çинчен чи малтан сăмах тухса каланă. Çав резолюци Англин тата ирĕклĕхе юрататакан ытти нацисен тĕллевĕсем пĕр пулни ӳсиине савăнса палăртать, çакă вăл Англипе Совет Союзĕн Мускаври тата Тегеранри конференцисенчи калаçăвĕсенчех лайăх курăнчĕ.

Англипе Российăн, тенĕ Притт, пĕрле çапла тумалла: перемири условийĕсем аслă пулччăр, çирĕп пулччăр, хăйсене пăсма нимĕнле май та ан хăварччăр. Вĕсем чăн-чăн тăвакан тата нимĕçсен хăйсем ишнине ура çине тăратмашкăн укçа тӳлеттерекен мирлĕ договор тумалла. Вĕсем Германие тата фашистла ытти çĕршывсене унта фашизма ĕмĕрлĕхех пĕтерсе лартма кирлĕ пек тыткаламалла.

Конгресс Англипе Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленине сарас тата малалла аталантарас тĕлĕшпе Англи правительстви йышăнакан мĕнпур мерăсене пĕтĕм вăйпа пулăшма пулнă.

Тупăшлă выльăх-чĕрлĕхшĕн

Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлерĕç. Государство планне район мăйракаллă шултра выльăхсем енĕпе 106.8 процент, сыснасем енĕпе 101,1 процент, сурăхсем енĕпе 114,5 процент тултарнă. Районри нумай колхозсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе кăтартуллăн ĕçлесе, фронт умĕнчи тивĕçе пурнăça кĕртрĕç.

«Емĕт» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 100 процент, мăйракаллă шултра выльăхсем енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 137 процент, сурăхсем енĕпе 122 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 137 процент тултарчĕ. Çак паха çитĕнӳсене тунăшăн ку колхоз Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ильич ячĕпе тăракан колхоз та (председателĕ Отечественнăй вăрçă инвалидĕ, орденоносец Петров юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă. Плана хисепĕ енчен тултарнипе пĕрлех, кунти колхозниксемпе колхозницăсем выльăхсен пахалăхне, вĕсен тухăçлăхне ӳстерессишĕн те çине тăрса ĕçлеççĕ. «Красный бригадир» колхоз государство планне мăйракаллă шултра выльăхсем енĕпе 10 процент чухлĕ, сурăхсем енĕпе 49 процент чухлĕ, сыснасем енĕпе 50 процент чухлĕ ирттерсе тултарнă.

Пирĕн колхозниксем ырханлă гитлеровецсенчен сиен курнă хамăр тăвансене пулăшма тăрăшаççĕ. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма пирĕн районри колхозсем лашасем 134 пуç, мăйракаллă шултра выльăхсем 184 пуç, сыснасем 162 пуç, сурăхсем 153 пуç ярса панă. Унсăр пуçне, Шăмăршăпа Пăрачкав районĕсене 26 лаша тата кастарнă вăкăрсем 50 пуç сутнă.

Хальхи вăхăтра пирĕн районри колхозсем умĕнче мĕнпур выльăх-чĕрлĕхе, уйрăмах çамрăк выльăхсене лайăх упраса хĕл каçарас задача тăрать. Çак задачăна пурнăçлас тесе, кашни колхозрах ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Пирĕн колхозсем утă иртнĕ çулхинчен пĕрре çурă хут ытларах хатĕрлерĕç. 60.300 центнер утăран 56.214 центнерне аслă конюхсен аллине актсем тăрăх панă. Силос хывмалли плана эпир 114,7 процент тултарнă. Выльăхсене тăрантарма 31.324 центнер çĕрулми, 760 центнер тымар-çимĕç, 15.865 центнер тĕштырă уйăрса хунă. Унсăр пуçне, выльăхсем валли 570 центнер вĕлтĕрен типĕтсе хатĕрленĕ. Ăна армана авăртса кайăк-кĕшĕксене тăрантарнă çĕрте усă куратпăр.

Колхозсенчи выльăхсем валли ăшă та çутă çуртйĕрсем пулаççĕ. Пирĕн районра комисси ĕçлет. Паянхи кун тĕлне лаша витисем 97 процент, ĕне фермисен çурчĕсем 93 процент, сысна фермисем 95 процент, сурăх фермисем 94 процент, кайăк-кĕшĕк фермисем 98 процент хĕле хатĕр. Ыттисене çак кунсенчех юсаса çитеретпĕр.

Анчах та лашасем ĕрчетес енĕпе пирĕн пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Эпир государствăн лашасем ĕрчетмелли планне пурĕ те 83,5 процент кăна тултарнă. Çак çитменлĕхе эпир тӳрлетме тăрăшатпăр. Лашасене колхозсенче мĕнле пăхнине тата ут таврашĕсем юсавлипе юсавлă маррине яланах тĕрĕслесе тăма районра икĕ комисси турăмăр. Çав комиссисем, кашни уйăхрах икĕ хутчен колхозсенче пулса, лашасемпе ут таврашĕсене тĕрĕслеççĕ.

Кăçал лашасем валли çителĕклĕ тарăч утă, çĕрулми, тĕштырă, силос уйăрса хутăмăр. Лашасем ĕрчетмелли плана тултарма пирĕн пур условисем те çителĕклĕ; эпир çав плана тултаратпăрах.

Кăçал пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлерĕç, пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татрĕç.

Октябрьти революци 27 çул тултарнă уява эпир вăйлă тырпулшăн тата тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн пыракан кĕрешӳ фронтĕнче паха çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илтĕмĕр. Тăван çĕршыва çителĕклĕ таран тырпул, аш-какай, сĕт-çу парса тăрса, эпир тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма тăван Хĕрлĕ Çара чыслăн пулăшăпăр.

Д. МИТЬКОВ.

ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ.

Халăх наказĕ

Хапхаран тухсан Емельян Денисович Денисов чылайччен ним хускалмасăр, çутçанталăкăн кĕрхи илемĕ çине пăхса тăнă. Халиччен 57 çул пурăнса, çутçанталăка курман мар вăл. Халĕ вăл ун çинчен мар шухăшлать. Паян унăн чĕрине почтальон илсе килнĕ савăнăçлă хыпар хаваслантарать.

Çуллахи хĕрӳллĕ кунсенче Элĕк районĕнчи Изванка колхозникĕсем те, пĕтĕм совет хресченĕсем пекех, ĕç кĕвви шăратса уйхирсенче ĕçленĕ. Хĕрӳллĕ ĕç хыççăн — канăç, хавас юрă, пыл-сăра... Мĕн кирли пĕтĕмпех пулнă. Ирсĕр нимĕç вăрçă пуçламан пулсан, халĕ мĕн тери лайăх пурнăç пулнă пулĕччĕ-ши?

Çак ыйту хăй тĕллĕнех кĕрет Емельян Денисовичăн пуçне. Вăл вара вăрçăччен, уяв кунĕсенче хăйĕн ывăл-хĕрĕсемпе пулас телейлĕх çинчен калаçнисене аса илет.

Колхозниксем умĕнче телейлĕ пурнăçăн çулĕ анлăн çуталса выртнă. Емельян Денисовичăн çемьи те çав çутă çулпа шанчăклăн малалла утнă. Унăн ывăлĕ Дмитрий Емельянов Элĕк районĕнчи шкулсенче 7 çул ытла учитель пулса ĕçленĕ. Тепĕр икĕ ывăлĕ урăх ĕçсенче пулнă. Хăй вăл колхозра ĕçленĕ.

Халĕ вăрçă. Емельян Денисовичăн ывăлĕсем виççĕшĕ те фронтра, нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçаççĕ. Çавăн çинчен çырса пĕлтернĕ те ĕнтĕ ĕнер почтальон килсе панă çырура. «Сирĕн ывăл Дмитрий Емельянов, — тенĕ çырура, — нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра Командованин заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçласа пырать. Вăл хăюллăн та паттăррăн çапăçать. Çавăншăн ăна Отечественнăй вăрçăн 1-мĕш степень орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденне тата «За оборону Сталинграда» медаль парса наградăланă. Сире хăвăрăн ывăлăра Правительство наградăсем панă ятпа саламласа сывлăх сунатпăр».

Дмитрий Емельянов пĕччен мар. Пирĕн чăваш халăхĕн темиçе пин ывăл-хĕрĕсем аслă вырăс халăхĕн ывăл-хĕрĕсемпе пĕрле, ирсĕр тăшмана пĕтерсе пыраççĕ. Вĕсем, фронтсенче Улăп-паттăрсем пек çапăçса, хамăрăн орденлă Чăваш республикин тивĕçне çӳлте тытса тăраççĕ. Ирсĕр тăшманпа çапăçнă çĕрте паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕсене 10.000 çынна ытла Правительство орденсемпе медальсем парса наградăланă, 25 çынна Совет Союз Геройĕн чаплă ятне панă.

Емельян Денисович Денисов, хăйĕн ывăлĕ паттăр пулнишĕн савăнса, часть командирĕ патне çапла çырса пĕлтернĕ: «Манăн ывăла икĕ орденпа тата медальпе наградăлани пире пĕтĕм чун-чĕререн савăнтарать. Эпĕ халĕ 57 çулта. Ватă тата сывлăх начар пирки фронтра пулаймастăп. Анчах манăн Димитрисĕр пуçне фронтра тата икĕ ывăл çапăçать. Эпĕ вĕсене çакăн пек наказ патăм: нимĕç захватчикĕсене ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырăр. Эпир кунта мĕн вăй çитнĕ таранах фронта пулăшассишĕн кĕрешетпĕр».

Çакăн пек совет халăхĕн наказĕ. Чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăл-хĕрĕсене çав наказа пурнăçа кĕртме хĕрӳллĕ ĕçпе те, тырпулпа та, укçа-тенкĕпе те пулăшать. Халăхăн вăйĕ нихçан та иксĕлес çук. Халăх вăйĕ çĕнтерӳ патне илсе пырать.

Максим ТИТОВ.

Манăн парне

Аслă Октябрь праçникне тăваттăмĕш хут ĕнтĕ вăрçă кунĕсенче уявласа ирттеретпĕр. Кăçал ку уяв пирĕн Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерӳсем тунă вăхăтра пулса иртет. Эпир, тылри çамрăксем, Хĕрлĕ Çара стахановла ĕçпе пулăшатпăр. Заводра виçĕ çул ĕçленĕ хушăра эпĕ ĕç нормине тултарманни пачах та пулман.

Кăçал Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту пуçлансанах эпĕ стахановла вахтăна тăтăм. Кулленхи ĕç нормине яланах 300 процент ытла тултарса пытăм.

Октябрь уявне ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунипе паллă тăвас тесе, эпĕ тăватă станокпа ĕçлеме тытăнтăм. Халĕ тăватă станокпа ĕçлесе, ĕç нормине 400-шер процент тултарса пыратăп. Çакă пулать ĕнтĕ манăн Тăван çĕршыва уяв ячĕпе паракан парне.

ВАЛЯ КУЧМИНА.

Канашри вагонсем юсакан заводри токарь.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Вальхерен утравĕ çинче союзниксен чаçĕсем Домбург хулине тăшмантан тасатнă. Ĕнер тăшманăн Флиссинген хулине хӳтĕлесе тăнă полкĕн командирне тыткăна илнĕ. Çав хулан çурçĕр пайĕнче нимĕçсем халĕ те хирĕç тăраççĕ-ха.

Хулан доксем ларакан районне тăшмантан тасатаççĕ.

Флиссинген хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Хĕвеланăç Капелле енчен çыран хĕррипе куçса пыракан чаçсемпе пĕрлешнĕ.

Ауденбос хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Марк шывĕн леш енчи плацдармсене шалалла аслăлатнă. Оостераут хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен маларах тытса илнĕ икĕ плацдарма хӳтĕлесе тăнă чаçĕсем пĕрлешнĕ; тăшман хытă хирĕç тăнă пулин те, вĕсем малалла кайнă.

Союзниксен çарĕсем Фоссенак хулинчен икĕ миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Шмидт хулине кĕрсе кайнă.

Тинĕс çумĕнчи Альпăсем çинче Соспель хулине тата Ментона хулинчен çурçĕртерехре Итали чиккинчи çӳллĕ вырăнсене тытса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ çĕр çинчи çарсене пулăшса тăнă тата тăшманăн Германипе Голландири объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Флиссинген хулине тăшмантан тасатнă ĕнтĕ. Союзниксен çарĕсем çав хула патĕнчен пăртак çурçĕрелле куçнă. Союзниксен Вальхерен утравĕн хĕвелтухăç сыранне антарнă çарĕсен чаçĕсем çав утравăн хĕвеланăç пайĕнчи çарсемпе пĕрлешнĕ. Голланди çĕрĕнче Стеенберген, Ньив Фоссемер тата Кладде хулисене йышăннă. Союзниксен Марк шывĕ çинчи Ауденбосран çурçĕртерехри укрепленине аслăлатнă. Союзниксен çарĕсем Клюндертран пĕр мильăра тăраççĕ.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче Шмидт хули çывăхĕнче тăшманăн контратакине сирсе янă. Союзниксен çарĕсем çав хуларан тухса кайнă. Халĕ вĕсем çĕнĕрен Шмидт хули патне çывăхарса пыраççĕ. Çав хуларан хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман хирĕç тăракан вырăнсене пĕтерсе пыраççĕ.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрла йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Германин промышленность центрне Золинген хулине тапăннă. Кăсхине йывăр бомбардировщиксен питĕ пысăк соединенийĕсем Германие çĕнĕрен тапăннă. Ку хутĕнче пуринчен ытла Рур облаçĕнчи Бохум хулине тапăннă. Вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем Трир çывăхĕнчи çар склачĕсене атакăланă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Европăри авиацийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: 1.100 йывăр бомбардировщик ытла паян Германири синтетически горючи завочĕсене, нефтьрен тĕрлĕ япаласем тăвакан заводсене, чугун çул деповине тата ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире патрульсем çеç кĕрешнĕ, тенĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире патрульсем çеç кĕрешнĕ, тенĕ.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Кăнтăр-хĕвеланăç Германири, Австрири тата Югославири объекчĕсене тапăннă.

Югославири çапăçусем

ЮГОСЛАВИ ЧАÇĔСЕМ ШИБЕНИК ПОРТНЕ ЙЫШĂННА

БЕЛГРАД, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн Верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Далмацире Югослави чаçĕсем çĕршыва тăшмантан тасатса пынă, нумай кунсем хушши пынă вăйлă çапăçусем хыççăн Шибеник порчĕпе тинĕс-çар базине йышăннă. Шибеник портне йышăннă хыççăн ĕнтĕ Адриатика тинĕсĕ хĕррине 400 километр таран тăшмантан тасатнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноспа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00781. Типография № 1, Управления полиграфиро [illegible] при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.